К 81.03
А65
26200-чув

И. А. АНДРЕЕВ

ÇЫН ЯЧĔСЕМ

КĔНЕКЕРЕ
ЯТСЕМ
МĔНЛЕ
ПУЛСА КАЙНИ
ÇИНЧЕН
ÇЫРСА
КĂТАРТНĂ

Национальная библиотека ЧР
4-026200

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

И. А. Андреев

К 81.03
А 65

ÇЫН ЯЧĔСЕМ

ШУПАШКАР
ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1983

ББК81 (Чув)
А65

ПРОВЕРЕНО
2010 15 МАР 2017

26200-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

А $\frac{4602000000-109}{М\ 136(03)-83}$ 137—83

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç.

ЧĂВАШ ЯЧĔСЕМ

Хальхи çамрăксем хушшинче ытларах илтĕнекен ятсене кăна асра тытас пулсан, чăваш ячĕсем çинчен каламалла, çăлтав та çук пек туйăнмалла. *Олег, Игорь, Инна, Эльза* — мĕн чăвашлăхĕ пултăр кун йышши ятсенче? Анчах та чăваш хушшинче яланах кун евĕр ятсем пулман. Аслăрах çулхисен ячĕсем халĕ те урăхларах, вĕсем хушшинче *Йăкăначĕ* те, *Мирунĕпе Укахвийĕ* те, *Лаврентийĕпе Евреççийĕ* те тăтăшах тĕл пулаççĕ. Унччен хи ятсене аса илес пулсан вара — ачаранпах асра юлнă *Сетнерсемпе Нарсписем, Атнерсемпе Пинерписем, Ухтивансемпе Савтеписем* куç умне туха-туха тăраççĕ. Шухăшĕ вара сисмесĕрех пуçра çуралса çирĕпленет: пурах иккен чăваш ячĕсем! Ал айĕнчи япалана асăрхайми пулнă пек, эпир вĕсене майĕпенех манăça хăварса пынă, аякрисене, хăнăхманнисене килĕштерме тытăннă.

Халăх хушшинчи ятсем вăхăт иртнĕçем улшăнса пынинчен тĕлĕнмеллиех те çук, мĕншĕн тесен ятсем авалтанпах халăхăн йăли-йĕркипе те, тĕнĕпе те, куллен хи пурнăçĕпе те тачă çыхăннă. Вырăссен, сăмахран, авалхи ячĕсем, хальхисемпе танлаштарсан, пачах урăхла пулнă, ытларахăшĕ вĕсенчен сăлтавлă, сунăмлă е сăнарлă ятсем пулнă. *Мал, Бел, Рябой, Кудряш, Черныш, Светлана* — шăпах çавнашкал сăнарлă ятсем. Çемьере кĕтнĕ ачана *Ждан*, кĕтменнине *Неждан* (хĕрача пулсан *Неждана*) е *Нечай* ят панă. *Первый, Старшой, Друган, Третьяк*—миçемĕш ача пулнине кура памалли ятсем пулнă. Сăмах май каласан, çемьере миçемĕш çуралнине шута илсе хумалли ятсем ытти халăхсен те пулнă, латинсенех акă: *Квинт* «пиллĕкмĕш», *Секст* «ултăмĕш», *Септимий* «çиччĕмĕш», *Октавий* «саккăрмĕш». Хальхи *«Нонна»* ят та — латинсенчен юлнăскер, латин чĕлхинче вăл «тăххăрмĕш» тенине пĕлтернĕ. Каярахпа

çакăн йышши ятсенчен *Жданов, Неждaнов, Нечаев, Друганов, Третьяков* хушаматсем пулса кайнă.

Варягсем тухăçри славянсем хушшине хăйсен ячĕсене илсе килнĕ: *Рюрик, Рогнеда, Аскольд, Игорь, Олег, Ольга.* Вĕсем авалхи герман чĕлхипе калаçнă, çавăнпа *Олегпа Ольга* пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ ятсем пулнă, «çутă» (у. к. сарă çӳçлĕ) тенине пĕлтернĕ. Славянсем хушшинче ку ятсен пĕлтерĕшĕсем çухалнă та, *Ольгăпа Светлана* (ку чăн-чăн вырăс ячĕ), пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ пулин те, тĕрлĕ ятсем пулса тăнă. Сăмах май, «çутă» пĕлтерĕшпе çыхăннă ятсем татах та пур: *Елена, Евлампий, Евлампия* (виççĕшĕ те авалхи грексенчен юлнă), *Альбина, Лука, Лукерья, Лилия, Люция*(авалхи латин чĕлхинчен), *Авенир, Сусанна* (авалхи еврей чĕлхинчен).

Православи тĕнĕпе пĕрле тухăçри славянсем хушшине Византирен авалхи грексемпе латинсен ячĕсем саралаççĕ. Анчах та православи чиркĕвĕ хисеплекен ятсем те пурте грекпа латин ячĕсем пулман, чылайăшĕ ку чĕлхене Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи авалхи чĕлхесенчен(ытларах авалхи еврей чĕлхинчен) кĕрсе юлнă. Çапла вара, паянхи ятсен çулĕ-йĕрĕ кăткăс та вăрăм, нумайăшĕ вĕсенчен халăхран халăха куçса улшăнса пынă.

Официаллă документсем çине епле çырăннине шута илсе, *Петĕр, Кĕркури, Тарье, Пăлаки* йышши ятсене эпир вырăс ячĕсем теме хăнăхнă. Куçасса вĕсем чăваш хушшине вырăссенчен куçнă. Анчах та, икçĕр çул хушши ытла чăваш хушшинче çӳресе, вĕсем чăвашланнă, чăваш чĕлхин кĕввине пăхăнакан пулнă, чăваш ячĕсем пулса тăнă. Аçтан тухса епле пулса кайни енчен пăхас пулсан, хальхи вăхăтра тĕрлĕ халăхра тухăçлăн усă куракан нумай-нумай ятсем пĕре килеççĕ. Акă, вырăсла *Иван,* грузинла *Вано,* армянла *Ованес,* нимĕçле *Иоганн,* грекла *Иоанис,* итальянла *Джованни,* французла *Жан,* акăлчанла *Джон,* испанла *Хуан,* португалла *Жуан,* датчанла *Ханс,* полякла *Ян,* латышла *Янис* — пурте вĕсем авалхи еврей чĕлхинчен тухнă ятсем. Анчах та хальхи вăхăтра кашниех вĕсенчен хăй чĕлхишĕн уйрăм ят пулса тăнă. Çавăнпа та пирĕншĕн те *Ванюк, Иванюк, Ванеç, Ванюш, Йăвак* — чăваш ячĕсем, *Иван* — вĕсен вырăсла ашшĕ. Çавнашкалах *Петĕр, Кĕркури, Тарье, Пăлаки* — чăваш ячĕсем, *Петр, Григорий, Дарья, Пелагея* — вĕсен вырăсла ашшĕсем. Официаллă документсене нумай çулсем хушши чăвашла çырман пирки кăна хамăр ятсене эпир хут çине чăвашла мар, вырăсла ӳкерсе пынă. Офи-

циаллă документсене чăвашла çырасси йăлана кĕнĕ пулсан, эпир те хамăр ятсене, грузинсем е латышсем пек, *Ванюк, Петĕр, Кĕркури* тесе çырнă пулăттăмăр. Ахальтен мар тĕпчевçĕсемпе çыравçăсем чăвашла çырнă чухне ячĕсене те чăвашла йĕркелеме тăрăшаççĕ: *Тимухха Хĕветĕрĕ, Çеçпĕл Мишши, Ухсай Яккăвĕ, Ваçça Аниççи* т. ыт. те.

Çапла вара, пĕр-пĕр халăх ячĕсем çинчен калаçнă чухне чи малтан çав ятсем ăçтан тухнине мар, халăх хушшинче епле формăллă пулнине шута илес пулать. Халăх хушшинче анлăн сарăлнă ят çав халăх чĕлхин кĕввине кĕрекен пулать, çавна май ятсем те, пĕтĕм чĕлхе пекех, халăха тивĕçлĕ уйрăмлăх пулса тăраççĕ.

Чăваш ячĕсене икĕ пысăк ушкăна пайлама пулать. Пĕри — авалхи ятсем, вĕсем хушшинче тĕп чăваш ячĕсем те пур, ютран илнисем те сахал мар. Православи тĕнне йышăниччен (чылай хушă ун хыççăн та) чăвашсем çак ятсемпе кăна çӳренĕ. Тепри — православи тĕнĕ урлă сарăлнă ятсем. Кусем шутне *Унтри, Ухванеç, Укахви, Лаврентти, Тимахви* йышши ятсем кĕреççĕ. Октябрь революциччен ят хурасси пĕтĕмпех чиркӳ аллинче пулнă, ача ятне ăна тĕне кĕртнĕ чух, чиркӳ календарьне пăхса, пуп панă. Революци хыççăн Совет влаçĕ чиркĕве патшалăхран уйăрать. Çуралакан ачасене ят хурса регистрацилесси загс органĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Ачипăчи ятне те ашшĕ-амăшĕ хăй суйлама ирĕк илет. Çавна май чăваш хушшинче те чиркӳ календарĕнчи ятсемсĕр пуçне, темĕн чухлĕ çĕнĕ ят сарăлать (*Октябрина, Ревмира, Коминтерн, Трактор* йышшисем). Пăхса тухнă чухне кусене те иккĕмĕш ушкăнах кĕртес пулать, мĕншĕн тесен вĕсем те авалхи ятсем мар, 20-мĕш ĕмĕрти ятсем.

ЯТ МĔН ТУМА КИРЛĔ?

Чи малтанах ят çынсене пĕр-пĕрне чĕнме кирлĕ пек туйăнать. Çакна пăхса, ята чĕнӳ сăмахĕ теме пулĕччĕ. Анчах та çынна ятне асăнмасăр та чĕнме пулать. Ĕлĕкрех чăвашсем пĕр-пĕрне ятран чĕннине килĕштерсех те кайман. Кĕçĕннисем аслăраххисене *пичче, аппа, тете,* ватăраххисене *мучи, кинемей* тенĕ. Аслисем кĕçĕннисене *шăллăм, йăмăкăм, кинĕм* тенĕ. Ача-пăчана вара пысăкки-

сем *ачам, ывăлăм, хĕрĕм* тенĕ. Пĕр ӳсĕмрисем пĕр-пĕрне *ырă çыннăм, тăванăм* тенине килĕштернĕ. Сăпайлăх мĕн иккенне ăнкарсах илеймен ача-пăча кăна пĕр-пĕрне ятран чĕннĕ пулас. Кун евĕр сăмахсемпе усă курмалли йĕрке чылаях кăткăс пулнă: хурăнташ-тăванлăха, аслине-кĕçĕннине, палланине-палламаннине шута илмелле пулнă. Тăван пиччĕшĕпе аппăшне чĕннĕ чухне ятне асăнма юраман, *пичче, аппа* кăна темелле пулнă, пиччĕшĕпе аппăшĕ темиçе пулсан — *пысăк пичче, вăталăх пичче, пĕчĕк пичче, аслă аппа, вăталăх аппа, пĕчĕк аппа* т. ыт. те. Тăван маррисене ятне хушса каланă: *Палюк пичче, Верук аппа.* Палламаннисене — каллех ячĕсĕр. Çак кăткăс йĕрке майĕпен улшăнса пырать пулин те, аслисене *пичче, аппа, инке, асатте, асанне, мучи, кинемей* тени чăваш çыннишĕн паян кун та кăмăллă. Капла калани, *Иван Петрович, Анна Ивановна* тесе ятран-шывран чĕннĕ пекех, çынна сумланине-хисепленине пĕлтерет.

Сăмах май каласан, ятран чĕннине ĕлĕкрех чăвашсем кăна мар, ытти халăхсем те килĕштермен. Паян кун та вырăссем аслисене кулленхи хутшăнура *дядя Вася, тетя Авдотья* теççĕ. Ятран-шывран *Василий Петрович, Авдотья Кирилловна* тесе чĕнесси официаллă калаçушăн кăна вырăнлă. Харпăр хăй ашшĕ-амăшне нимле халăх çынни те ятран чĕнмест — шăпах çак ĕлĕкрен-авалтан пыракан йĕрке тăрăх! Тухăçри халăхсен (çав шутра авалхи чăвашăн та) ку йĕрке ытларах упраннă. 150—200 çул каярах чăваш хĕрарăмĕ ашшĕ-амăшĕн ятне пачах та асăнма пултарайман, урăх çынна çав ятпа палăртмалла чухне *атте ятли, анне ятли* тенĕ.

Çапах та ятран чĕнес йĕрке хальхи вăхăтра чăваш хушшинче те вăй илсе пырать. Ача-пăчасемпе çамрăксем тăван пиччĕшĕсемпе аппăшĕсене те ятран чĕне пуçларĕç, пĕр-пĕрне вара ятран кăна чĕнеççĕ. Çулланнисем хăйсенчен аслисене ятран чĕнсех каймаççĕ, анчах та хăйсенчен кĕçĕннисемпе калаçнă чухне вара вĕсен çавăнчен те *шăллăм, йăмăкăм, хĕрĕм, кинĕм* евĕр сăмахсем тухасшăнах мар, çара ят кăна ытларах илтĕнет. Калаçура та питĕваскатпăр пулас, кăмăллă сăмах та ытлашши пек туйăнна пуçларĕ пулмалла пире. Çапах та, ватти вĕрентмесĕр, çамрăкки епле ăса кĕтĕр?

Çапла вара, ятăн чĕнӳ функцийĕ хальхи вăхăтра ӳссех пырать. Апла пулин те, ята ытти чĕнӳ сăмахĕсемпе пĕр рете лартма май килмест. Уйрăмлăхĕ акă мĕнре.

Пĕрремĕшĕнчен, ытти чĕнӳ сăмахĕсем пĕр-пĕр пĕлтерĕшпе ҫыхăннă: тăванлăхпа (атте-анне, асатте-асанне, кукаҫи-кукамай т. ыт. те), ӳсĕме палăртассипе (пиччешăллăм, аппа-йăмăк, инке-кин), этикетпа (юлташ — официаллă йĕркепе калаҫнă чух, тусăм — ҫывăх ҫынпа калаҫнă чух, ырă ҫыннăм — хисепленине палăртмалла чух т. ыт. те). Ятсен кунашкал пĕлтерĕшсем ҫук: тăвана та, тăван мар ҫынна та пĕр ятпах чĕнетпĕр. Иккĕмĕшĕнчен, ытти чĕнӳ сăмахĕсем пĕлтерĕшĕпе пурте пĕтĕмлетӳллĕ: сăмахран, пичче арăмне кашниех *инке* тетпĕр, аннен шăллĕне — *кукка.* Ят вара — кашни ҫыннăн хăйĕн: пĕри *Петĕр,* тепри *Марине,* виҫҫĕмĕшĕ *Хĕветĕр* т. ыт. те. Акă хайхи ятăн чăн-чăн тивĕҫĕ патне ҫите пуҫларăмăр: ят ҫынна ыттисенчен уйăрмалли паллă пулмалла. Ҫынни ҫук чухне те унăн ячĕ тăрăхах калаҫу кам ҫинчен пыни уҫăмлă пулмалла. Кунтан акă мĕн тухса тăрать: кашни ҫыннăн уйрăм, урăх пĕрре те тĕл пулман ят пулмалла. Анчах та пурнăҫра вара кунашкал йĕрке нихҫан та нихăш халăхăн та пулман. Пуласса шанма та йывăр. Сăлтавĕ акă мĕнре.

1979 ҫулхи перепись тăрăх чăвашсем пĕр миллион та 751 пин шутланнă. Кашнинех уйрăм ят парас пулсан, ячĕ те ҫавăн чухлех кирлĕ пулать. Ҫав перепись тăрăхах вырăссем 137 миллион ытларах шутланнă. Китаецсен хисепĕ хальхи вăхăтра пĕр миллиарда ҫывхарать теҫҫĕ. Ун чухлĕ ят халиччен нимле чĕлхере те пулман. Пулас пулсан та, кам вĕсене асра тытса суйласа илме пултартăр? Ҫапла вара, кашни ҫыннăн хăйне кăна тивĕҫлĕ уйрăм ят пулни кулленхи пурнăҫра ятсемпе усă курассине ҫăмăллатмасть, йывăрлатать кăна.

Ку таранччен ят йĕркине чĕлхи хăех кирлĕ пек майлаштарса пынă. Пĕр ятлă ҫынсем (ĕлĕкхилле каласан — аташсем, хальхилле яташ тесен те пăсмасть пуль — ят сăмахпа ҫыхăнни уҫăмлăрах пулать) чăваш хушшинче, ытти халăхсенни пекех, ĕлĕкренпех пулнă. (Сăмах май, пĕр ятлă ҫынсем ҫĕр ҫинче пур халăхăн та пулман, Ҫĕнĕ Гвинейăра пурăнакан папуассен маринданим йăхĕнчех акă яташсене тиркенĕ. Ятсене вĕсем кӳршĕ халăхсенчен те вăрлама тăрăшнă. Вăрҫă-ҫапăҫура кама та пулин вĕлериччен чи малтан унăн ятне ыйтнă: хăйсем валли ят ҫитмен).

Пĕр ятлă ҫынсене чăвашсем е хушма ят тăрăх, е ашшĕ ятне асăнса уйăрнă: *Миник Микули, Тунюк Микули, Чипер Микула, Вăрăм Микула.* Тепĕр чухне уйăрмалли

ят виçĕ е тăвата сыпăклă та пулма пултарнă: *Микула Унтри Йăванĕ е Тунюк Микули Унтри Йăванĕ.* Мана хамах ĕлĕк ялта çапла калакалатчĕç.

Хальхи вăхăтра пирĕн те вырăссенни пекех, çынна палăртмалли ят виçĕ элементран тăрать: хушамат, ят тата аттемĕр ячĕ. Вĕсене виççĕшне те çут тĕнче курнă çыннăн çуралу хучĕ çине çырса хураççĕ, каярахпа вĕсем паспорт çине куçаççĕ те, çын вĕсемпе мĕн виличченех пĕрле çӳрет. Çак виçĕ элементран тăракан çын ячĕ унăн уйрăлми палли пулса тăрать. Çапла вара, хальхи чĕлхере ят сăмахăн пĕлтерĕшĕ анланчĕ, вăл çыннăн чăнчăн ятне те (Марине, Сетнер), паспорт çине çырăнакан виçĕ элементлă пĕрлĕхе те пĕлтерет (Платонов Сергей Петрович). Чĕнессе те халь çынна виçĕ тĕрлĕ чĕнме пултаратпăр: ячĕ тăрăх (тантăшсемпе е хамăртан çамрăкраххисемпе калаçнă чух: Герман, Венера), хушамачĕпе (официаллă калаçура, список тăрăх чĕннĕ чух, çарта, шкулта т. ыт. те), ячĕ-шывĕпе (Нина Павловна).

ЯЛ ХУШШИНЧИ ЯТПА ХУТ ÇИНЧИ ЯТ

Маларах эпир ятăн икĕ тĕп функци пулни çинчен асăнтăмăр. Пĕр енчен, ят çынсене пĕр-пĕрне чĕнме кирлĕ. Тепĕр енчен, ят çынна куç хыçĕнче ыттисенчен уйăрма кирлĕ: çыннăн ячĕ сăмах кам çинчен пынине уçăмлăн кăтартмалла. Пĕрремĕшне ятăн чĕнӳ функцийĕ, иккĕмĕшне вара ятăн палăрту функцийĕ теме пулать. Тĕрлĕ сăлтавсене пула çак икĕ функци тепĕр чухне пĕрне-пĕри хирĕçлеме тытăнаççĕ. Çавна пула çыннăн куç умĕнче чĕнмелли ячĕ пĕр тĕрлĕ, куç хыçĕнче палăртмалли тепĕр тĕрлĕ пулса каять.

Калăпăр, хут çинче çын Лаврентьев Алексей çырăнать. Çав ятпа вăл кантурта ĕç укçи илет, суйлава çӳрет, пухусенче ăна çав ятпа асăнаççĕ. Анчах та ялта ăна куç хыçĕнче пурте тенĕ пекех Лаврен Элекçи тесе чĕнеççĕ. Ку ĕнтĕ халăх ăстăнĕнче çынна хушаматпа ята пĕрлештерсе палăртасси çирĕпленсех çитменнинчен килет. Авалтан пыракан йĕрке тăрăх чăвашсем çынна куç умĕнче ятне асăнса чĕннĕ: Сахар мучи, Петĕр пичче, Микулай шăллăм, Кулине аппа, Верук кин. Куç хыçĕнче вара çав çыннах ашшĕ ячĕ урлă палăртнă: Пăрамун Сахарĕ, Йăкăнат Микулайĕ, Çарак Верукĕ. Чăннипе ĕнтĕ

Лаврентьев Алексей е Лаврен Элекçийĕ тенисем содержанийĕпе пĕрешкелех, формипе çеç вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ: пĕри вырăсла, тепри чăвашла.

Тепĕр тĕслĕх. Çыннăн хут çинчи хушамачĕпе ячĕ Волков Василий. Анчах ялта ăна ытларах куç хыçĕнче Кашкăр Ваççи теççĕ. Хăй вăхăтĕнче Кашкăр тени вĕсен сыпăкран сыпăка куçса пыракан ăру пуçĕн ячĕ пулнă. Халĕ вара ял çынни е çавна асра тытса Кашкăр Ваççи тет, е Волков хушамата чăвашлатса Кашкăр тет. Куç умĕнче, паллах, ăна никам та Кашкăр Ваççи темест. Хайĕнчен асларахисемшĕн вăл Ваççа шăллăм, кĕçĕннисемшĕн — Ваççа пичче, чылайăшĕ ăна çĕнĕлле Василий Петрович тесе те чĕнеççĕ. Çапах та кунта Волков Василий тенипе Кашкăр Ваççи тенисем хушшинче çыхăну пур. Нумай чухне хут çинчи ятпа ял хушшинчи хушма ят хушшинче нимле çыхăну та çук.

Çынна ял хушшинче хушма ят парасси, паллах, çĕнĕ йăла мар. Авалхи çын ят хăватне хытă ĕненнĕ, ачан сывлăхĕ те, пулас пурнăçĕ те, телейĕ те ятран килет тесе шутланă. Вилĕмпе тĕрлĕ чир-чĕр те ача-пăчана ят тăрăх шырать тесе шутланă пулас. Çавăнпа та ача-пăча пурăнман çемьере çĕнĕрен çуралакан чуна юриех килĕшӳсĕр ят панă (*Усалли* е *Усалук — усал* сăмахран, *Тĕкли* — чăвашсем хушшинче тĕл пулакан *Теклев* хушамат шăпах çак ятран пырать, *Çӳппи, Каяш, Асси* т. ыт. те). Ĕлĕкрех çынна йытă ятне парасси те (*Анчăк, Хураç, Улай*) çак йĕркепех çыхăннă пулас. (*Улай, Хураç* евĕр çын ячĕсем йытă ячĕсемпе пĕре килнин сăлтавĕ урăх та пулма пултарнă.) Çаксене пĕле тăркач килĕшӳсĕр ят хуçи хăйĕн ячĕ илемсĕрришĕн кӳренмесен те пултарнă. Тата, кӳренсен те, мĕн тăвăн? Иккĕмĕш е хушма ят çуралнă чух панă ят çумне каярахпа та хушăнма пултарнă — *Шатра, Кукша, Чăлах, Чапрас* евĕр ятсене, паллах, çуралнă хыççăнах пама пултарайман. Авал чăнчăн ятпа хушма ят хушшинче уйрăмлăх чылай халăхăн пулман[1]. Хут çине çырса çирĕплетмен ят пурăна киле тепĕр ятпа, паллах, çăмăлах ылмашăнма пултарнă.

Каярахпа çынна ял хушшинче иккĕмĕш ят парасси пĕрешкел ятсем йышланса кайнинчен те килме пултарнă.

Кӳршĕ-аршă хушшинче пĕр-пĕрне ял хушшинчи ятпа асăнни чăрмав кӳмест пулĕ те, аякри çыншăн вара ку йĕрке пачах та ырă мар: тепĕр чухне кирлĕ çынна шы-

---

[1] А. А. Угрюмов. Русские имена. Вологда, 1970, стр. 7.

раса чылаях хăшкăлатăн. Ирĕксĕрех М. Н. Якимов пĕррехинче хаçатра шӳтлерех çырни аса килет:

«Кам та пулин яла пуçласа килес-мĕн пулсан, хăвна кирлĕ çынна тупиччен тинке тухать. Хушаматне те калатăн, ашшĕ ятне те пĕлтеретĕн, ятне те асăнатăн — кăлăхах, никам та унăн килне кăтартса параймасть. Ĕçпе яла килнĕ кунах пĕр ватăрах хĕрарăмпа тĕл пултăм. Унран аннен кĕçĕн йăмăкĕн упăшки Трофим Кудряшов хăш тĕлерех пурăннине кăтартма ыйтрăм.

— Кам тетĕр?

— Трофим Кудряшов,— тетĕп.

— Ăçтисем вăл? — тĕлĕнет кинемей,— тем, астумастăп. Урăх ялтан пуль. Тем, илтмен.

Миçе çынпа каласмарăм-ши! Кашниех: «Кам-ши вăл? Çук пуль, пирĕн ялсем мар пуль»,— тесе, мана куçран пăхса тĕлĕнет.

Аптранă енне çурăм хыçне сумка çакнă вун-виникĕ çулхи ачаран ыйтрăм.

— Эсир ман аттене шыратăр,— терĕ вăл. Хăй ахăлтатсах кулса ячĕ.— Ун пек ятпа эсир ăна вĕлерсен те тупас çук. Теприниче Кăтра Трапхинĕ ăçта пурăнать тесе ыйтăр, вара туххăмрах тĕллесе кăтартĕç.

Ача шкултан таврăнать-мĕн. Урампа пынă май вăл хăш килте кам пурăнни çинчен каласа пачĕ. Çак çуртра, тет ача, Така Çеменĕ пурăнать. Унпа юнашар Праски Михалĕ. Авă, шăвăç витнĕ пӳрте куратăр-и? Унта Пăрчăкан Кĕтерукĕ патне киле кĕнĕ Сопакай Лариванĕ кăçал пуçласа хĕл касрĕ. Хирĕç чул çуртра — Салакайăк Кĕçтуçĕ. Ку магазинра ăна уçнăранпах Вырăс Микули сутă тăвать. Ав пăрăхран витрене шыв тултараканни Тимĕрç Ваççин хĕрĕ Натали. Унăн çитес эрнере туй пулать, Пушăт Порки Сантăрне качча тухать терĕç.

Хампа юнашар утса пыракан ачан аппăшĕ Антонина Хлек Ванькине качча тухнă иккен. Халĕ ĕнтĕ вăл Антонина Кудряшова мар-мĕн. Ăна ялйыш Хлек Ванькин Тоньки тесе чĕнет.

Ваçça каланă тăрăх, Хучăшкара ят кĕнеки çине çырса хунă ятпа çӳрекенни ялĕпе те пĕр çын çеç-мĕн» («Ком. ял.», 1979, апр. 15-мĕшĕ).

Кунта каланинче кăштах ӳстерни те пулĕ те, çапах ку чухне ялти çынсем пĕр-пĕрне мĕнле палăртнине пĕтĕмĕшпе тĕрĕсех сăнлать автор.

Çапла вара, хут çинчи ятпа ял хушшинчи ят халлĕхе нумай чухне пĕре килмеççĕ. Ял хушшинчи ятăн чĕнӳ

функцийĕ çук, куç умĕнче çынна вăл ятпа чĕнмессĕ. Ял хушшинчи ятăн палăрту функцийĕ кăна. Ял хушшинчи ятра çыннăн ашшĕ ячĕ кăна мар, амăшĕн, асламăшĕн е кукамăшĕн ячĕ те пулма пултарать (Праски Михалĕ, Матрунь Еленĕ). Çапах та юлашки тапхăрта ял хушшинче те хут çинчи ят ытларах та ытларах сарăлса пырать. Çамрăксем кăна мар, ватăраххисем те пĕр-пĕрне хушаматпа (Теплов, Скворцов, Тимуков) е ятран-шывран Семен Григорьевич, Иван Сергеевич тесе асăннине кăмăлларах параççĕ.

ЯТĂН ПĔЛТЕРĔШĔ ПУР-И?

Вера, Надежда, Любовь ятсен пĕлтерĕшĕ вырăсла чухлакан çыншăн иккĕленӳсĕр. Чăвашла Салампи ятăн пĕлтерĕшĕ те тĕксĕмленсех ларман, вăл «кăмăллă, таврат хĕр» тенине пĕлтерет. Ахальтен мар Александр Артемьев хăйĕн кĕнекин пĕр сыпăкне «Саламби — саламлă ят» сăмахсенчен пуçлать. Çакăн йышши ятсене асра тытса, час-часах ман ят мĕне пĕлтерет-ши тесе ыйтаççĕ: ят хуçисен хăйсен ячĕсене пĕлтерĕшĕпе те кăмăллă тăвас килет.

Çын ячĕсем хуть те хăш чĕлхере те тахçан авал пурте пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пулнă. Пĕлтерĕшсĕр ят пулман. Пуласса та çын ячĕсем чĕлхери пайăр мар ятсенчен пулса кайнă (наукăра пайăр мар ятсене апеллятив теççĕ). Халăхран халăха, ĕмĕртен ĕмĕре куçса пырса, нумай-нумай ят хăйсен малтанхи пĕлтерĕшне çухатса пынă, пĕлтерĕшсĕр ятсем пулса тăнă. Акă темиçе тĕслĕх.

Çур ĕмĕр каялла чăваш хушшинче те Иван ят, вырăссенни пекех, час-часах тĕл пулаканнисенчен пĕри пулнă. Анчах та унăн пĕлтерĕшĕ вырăссемшĕн кăна мар, авалхи грексемшĕн те паллă пулман. Грексем ăна авалхи еврей чĕлхинчен йышăннă, унта вăл «турă парни» тенине пĕлтернĕ. Петĕр ят авалхи грек чĕлхинче «чул» пĕлтерĕшлĕ пулнă. Сăмах май, «чул» пĕлтерĕшлĕ ятсем ытти халăхсен те пулнă. Акă ĕлĕкхи чăваш ячĕ Акташ та «шурă чул» тенине пĕлтерет, чăвашсем ăна тутарсенчен йышăннă. Тутарсен Такташ ят пур, вăл «гранит» пĕлтерĕшлĕ. Христос тĕнне йышăниччен ку ят та чăваш хушшинче çӳренĕ. Элĕк районĕнчи Тукташ ялĕн ячĕ—çав ятран юлнăскер. Илле Тукташ поэт хăйне валли

псевдоним вырăнне тăван ялĕн ятне йышăннă. Иллĕ тенĕрен, ку ят та авалхи еврей чĕлхинчен пыраканскер, унта вăл «турăçăм» пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Леонид вара авалхи грексемшĕн «Леон ывăлĕ» пулнă. Леонĕ хăй вырăсла Лев, чăвашла Арăслан пулать. Хайхи, чăвашла куçарсан, Леонид — Арăслан ывăлĕ пулса тухать. Çав йĕркепех: Кронид — Крон ывăлĕ. Арăслан та арçын ячĕсенче авалтанпах сарăлнă: арабсен Хайдарĕ те — арăслан, чăвашсем Хайдартан Айтар тунă. Руслан ята вырăссем тĕрĕксенчен йышăннă, ĕлĕкхи пĕлтерĕшĕ кунта та арăслан. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕнчи Шерккей те ячĕпе çав арăсланах: ку ята авалхи чăвашсем перссенчен йышăннă, перс чĕлхинче *шер* арăслан тениех пулать. *Шер* сăмах çумне чăвашсем *-кке* пĕчĕклетӳ аффиксĕ хушнă (танл. шĕвĕркке), ун çумне тата *-ей* чĕнӳ аффиксĕ. Хайхи Шерккей ят пулчĕ те. Чăвашлатас тенĕ пулсан, Арăсланкай темеллеччĕ ĕнтĕ—Хусанкай тенĕ пекрех. Çапла вара, Леон, Лев, Леонид, Леонтий, Арăслан, Руслан, Шерккей — пурте «арăслан» пĕлтерĕшлĕ ятсем.

Хăшпĕр ятсем авал çынна ăçта пурăннине кăтартаканнисем пулнă. Акă Адриан тени латин чĕлхинче «Адрия çынни» тенине пĕлтернĕ (Адрия хула ячĕ пулнă). Адриан ятран халăх чĕлхинче Андриан çуралать (хамăр чаплă космонавтăмăр ячĕ) — Адриан ята Андрей ятпа пăтраштарнине пула. (Андрей ячĕ хăй — грек сăмахĕ, «паттăр, хăюллă» тенине пĕлтернĕ.) Роман та латин ячĕ, ĕлĕк вăл «Рим çынни, Рим гражданĕ» тенине пĕлтернĕ (Римра пурăнакансем пурте Рим гражданинĕ шутланман.)

Авалхи грек чĕлхинче Филипп «ут юратакан» тенине пĕлтернĕ. Чăвашла вăл Хĕлĕп пулса тăнă. Нина ята вырăссем грузинсенчен йышăннă теççĕ, сăмахăн авалхи тымарĕ пурпĕрех грек чĕлхинеллех туртăнать: грексем авалхи Ассири патшалăхĕн тĕп хулине Нинос тенĕ, Нина ят çав хула ятĕнчен пырать теççĕ тĕпчевçĕсем.

Хальхи чĕлхешĕн ятсен пĕлтерĕшĕ уçăмлă мар пулин те, чылайăшĕ ачи-пăчи валли ят шыранă чухне пĕлтерĕшлĕ ятсене кăмăлларах парать. 20-мĕш çулсенче тата 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче, сăмахран, ятсене çĕнĕ саманапа çыхăнтарма тăрăшатчĕç. Арçын ачасене Коминтерн, Владилен (Владимир Ильич Ленин ячĕнчен кĕскетсе тунăскер), Трактор, Талант, Гений, хĕрачасене Пятилетка, Ревмира (революция мировая тенине кĕс-

кетсе), Сталина (Сталин ятĕнчен) ятлă хуратчĕç. Халĕ унашкал ятсем тĕл пулмаççĕ. Çапах та ашшĕ-амăшĕ харпăр хăй ачине кирек хăçан та ыррине çеç сунать: сăнĕ-пуçĕпе те ăна чипер тăвасшăн, сывлăхĕ те тĕреклĕ пултăрччĕ тет, пултарулăхĕпе те ыттисенчен кая ан юлтăрччĕ, ӳссе çитсен, халăхра та ятлă-сумлă çын пулинччĕ тесе ĕмĕтленет. Хăй ĕмĕтленнине вара ятра та палăртма тăрăшать. Пĕр 7—8 çул каялла ман пĕлĕшсем хĕрне Сывпи ятлă хучĕç — сывă сăмаха ăсра тытса ĕнтĕ. Ят тумалли калăпĕ авалхиех (танл.: Илемпи, Сарпи, Нарспи), çапах та Сывпи—çĕнĕ ят. Авалхи чăвашсен те пулнă çакнашкал пĕлтерĕшлĕ ят: «сывлăхлă пултăр» пĕлтерĕше тĕпе хурса, хĕре вĕсем *Исенпи,* ывăла *Исентей* тенĕ (варианчĕсем: *Исени, Исеней, Исенти, Ишентей,* хальхи Ижендеев хушамат шăпах авалхи Ишентей ятран юлнăскер). Авалхи тĕрĕк чĕлхинче *исен* «сывлăхлă, тĕреклĕ, çирĕп» тенине пĕлтернĕ. Ĕлĕкхи ятсен пĕлтерĕшне пĕлнĕ пулсан, тен, ман пĕлĕшсем те хăйсен хĕрĕ валли çĕнĕ ят шырамастчĕç, киввинех кăмăллатчĕç пулĕ.

ЯТ ПАРАССИ ҪАМРАН ҪИЛЕТ?

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра çуралнă ачана мĕнле ят парасси унăн ашшĕ-амăшĕнчен кăна килет. Ашшĕ-амăшĕ мĕнле ята кăмăллать — çав ята çыртараççĕ. Ҫанашлама-сĕнме, паллах, кирек кам та пултарать — аслашшĕ, асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ, кӳрши-арши, пиччĕшĕ-аппăшĕ т. ыт. те. Çамрăк мăшăрсем час-часах, пĕр-пĕрне пăхса, ачисене ят хураççĕ — пĕрисен Олег пулсан, теприсене те çав ят килĕшсе каять. Вылять вара урамра ушкăн-ушкăн ача, вĕсенчен çурри Олег, тепĕр çурри — Игорь. Литература произведенийĕсенчи, кинофильмсенчи персонажсене пăхса панă ятсем те сахал мар. Анчах та темшĕн ютран килнĕ ятсем хитререх туйăнаççĕ çамрăксене: Эмма, Эльза, Жанна, Артур, Руди (Рудольф) т. ыт. те. Ирĕксĕрех каярахпа куçа чарса пăхатăн ун пек çын çине: сăнĕ-пуçĕпе те чăвашах хăй, тумĕ-сийĕ те хамăрăнни пекех, ячĕ вара — ют. Ĕне çинчи йĕнерчĕк пекрех туйăнса каять.

Пĕр вăхăтра, Юрий Гагарин, Герман Титов, Андриян Николаев космонавтсем тĕнче уçлăхĕнче çӳресе таврăннă хыççăн, пĕтĕм çĕршывĕпех Юрий, Герман, Андриян

ятсем йышланса кайнăччĕ. Кунтан тĕлĕнмеллиех çук: чапа тухнă çынсен ячĕсене мĕн авалтанпах кăмăллакан халăхра. Суйласса та ята ытларах çыннине пăхса суйланă, кăмăллакан çыннăн ячĕ те илемлĕн туйăннă. Ăшри темле вăрттăн кĕтесре кун пек туйăм паян кун та упранать-ха, хамăр ывăл-хĕре ыр çын ятне пани ăна та çавнашкал пулса ӳсме пулăшассăн туйăнать. Кăмăлламан çыннăн вара ячĕ те килĕшмест.

Çакăн пекки те пулкалать: пĕр йăх-яхĕ, хăйне тыткала пĕлмесĕр, çын çинче ятне ярать те — пĕр вăтăрхĕрĕх çул хушши ялĕнче кăна мар, таврара та халăх ун ятĕнчен писет. Ятĕнче нимле кăлтăк та çук ĕнтĕ, ăна тиркемелле те мар пек, çав ятлă çынсемех ыттисем чиппиперех пурăнаççĕ, харпăр хăйне йĕркеллĕ тытаççĕ. Анчах мĕн тăвăн—чун туртмасть. Австри хаçачĕсем çырнă тăрăх, вăрçă чарăнни вăтăр çул иртнĕ хыççăн та Венăри çынсем хăйсен ачисене Адольф ят памаççĕ.

Чылай халăхăн çакнашкал йăла пур: мăнукĕсене аслашшĕ-асламăшĕ ятне пама тăрăшаççĕ. Ырă йăла. Эпир йăхран писнĕ Йăвансем мар, атте-асаттесене манмăпăр, вĕсен ятне çĕртмĕпĕр, киввинчен те писмĕпĕр, çĕннине те тиркемĕпĕр — акă мĕнле шухăш тытса тăрать ăна. Халĕ, харпăр хăй кăмăлласа суйланă ята йышăнма ирĕк пур чухне, ку йăлана тытса пыма та меллĕ.

Ята çынна кура суйлани, ман ача-пăчан ячĕ те ыттисенни пекех пултăрччĕ тени сисмесĕрех ятсене, çипуç пекех мода картне лартать. Кăçал ятсен пĕр ушкăнĕ, тепĕр ик-виç çултан урăххисем хитререх пек туйăна пуçлаççĕ. 19-мĕш ĕмĕрĕн вĕçнелле чăвашсем хушшинче, вырăссенни пекех, Матĕрне, Кулине, Укахви, Евреççи (Ефросиния), Ултутти (Евдокия) ятсем сахал мар пулнă. Халĕ вара вăл ятсенчен пачах та писрĕç. Те ытла кивĕ пек туйăнаççĕ вĕсем, те тата урăх тиркемелли сăлтав пур. Дуня сăмаха ансат калаçура «дура» пĕлтерĕшпе усă курнине шута илсе, Евдокия ята тиркенине ăнланма та пулать пек (кирек камăн та хăйĕн хĕрне ун пек калаттарса мăшкăлламалла тăвас килес çук). Ытти ячĕсене мĕншĕн тиркенине вара ăнланма хал çитмест. Кам пĕлет, авалхи тĕрĕ-сурпан, алтăр-çăпала тавралшĕ хака кĕре пуçланă пек, çывăх вăхăтрах кунашкал ятсем те модăна кĕрсе кайĕç-и, тен.

КУ ЧУХНЕХИ ЯКА ЯТСЕМ

Мӗнлерех-ши хамӑр республикӑра ку чухнехи ятсем? Ятсен хисепӗ чакса пымасть-ши? Малашне те ҫынсене хутран-ситрен ят инкекне лекмелле пулмӗ-ши? Ҫак ыйтусем ҫине ответ шыраса, эпир студентсемпе республикӑри ятсене тишкерсе тухас шут тытрӑмӑр. Виҫӗ ҫул хушшинче (1968, 1969, 1970) республикӑри виҫӗ хулапа виҫӗ районта ачасене мӗнле-мӗнле ят панине шутласа тухрӑмӑр (шутлаканни Валя Васильева студентка пулчӗ, ҫын ячӗсем тӑрӑх вӑл диплом ӗҫӗ ҫырчӗ). Хулисем: Шупашкар (Ҫӗнӗ Шупашкарсӑр), Ҫӗмӗрле, Етӗрне. Районсем: Шупашкар, Елчӗк, Патӑръел.

Халӑхра ку чухне хӑш-хӑш ята ытларах кӑмӑлланине тата ҫав ят мӗн чул ырӑн йышӑннине ҫак таблицӑра курма пулать (таблицӑна пӑхӑр). Таблицӑна асӑннӑ хуласемпе районсенче ытларах тӗл пулакан 5-шер ята кӗртнӗ.

Таблицӑри цифрӑсем шухӑшлаттараҫҫӗ. Кунта савӑнтараканни те пур. Ҫав вӑхӑтрах пӑшӑрхантараканни те ҫук мар. Ҫапах та малтан ыррине палӑртар-ха. Акӑ вӗсем.

Пӗрремӗш. Ялпа хула ят тӗлӗшӗнчен те ҫывӑхланса пыраҫҫӗ. Ку ҫывӑхлану чи малтан час-часах тӗл пулакан ятсенче палӑрать, ялта та хулари ятсемех вӑй илсе пыраҫҫӗ — арҫынсен те, хӗрарӑмсен те. Уйрӑмлӑхӗ нумаях мар: Николайпа Юрий асӑннӑ районсенчи ялсенче часчас усӑ куракан 5 ят шутне кӗреҫҫӗ, хулара вӗсем ку шута кӗмеҫҫӗ. Ҫавнашкалах Людмилӑпа Галина та ялта хуларинчен ытларах тӗл пулаҫҫӗ. Ялта тата усӑ куракан пӗтӗм ятсен хисепӗ те йышлӑрах: акӑ Шупашкарта 6677 ывӑл ачана 126 ят, 6161 хӗрачана 153 ят тивет пулсан, Патӑръел районӗнче вара 2110 ывӑла 208 ят, 2020 хӗрачана 205 ят тивет.

Иккӗмӗш. Хӗрарӑм ячӗсем арҫын ячӗсенчен ытларах: Шупашкартах акӑ усӑ курнӑ арҫын ячӗсен хисепӗ 126, хӗрарӑмсен 153; Ҫӗмӗрлере 46 арҫын ячӗ ҫине хӗрарӑм ячӗ 59 тивет. Ҫав вӑхӑтрах ҫуралаканнисен хисепӗнче хӗрсем ывӑлсенчен сахалтарах та. Иртнӗ саманасенче хӗрарӑм ячӗ арҫын ячӗсенчен пур халӑхӑн та тенӗ пекех буншар хут сахалтарах пулнӑ. Хӗрарӑма ятран чӗнсе чӑрманман. Качча тухиччен вӑл ашшӗн хӗрӗ, качча тухсан — упӑшкин арӑмӗ е хуняшшӗн кинӗ пулса тӑнӑ. Паянхи кун хӗрарӑм ячӗсен хисепӗ арҫын ячӗсенчен иртни

Т а б л и ц а

1968—1970 çулсем	Çуралнисен пĕтĕм хисепĕ	Ывăлсем	Хĕрсем	Усă курнă ятсен пĕтĕм хисепĕ		Пуринчен ытларах тĕл пулакан ятсем (ывăл)			Пуринчен ытларах тĕл пулакан ятсем (хĕр)		
				ывăл	хĕр	ячĕ	хисепĕ	процентчĕ	ячĕ	хисепĕ	процентчĕ
						Сергей	1120	16,8	Елена	700	11,3
						Александр	662	9,9	Светлана	683	11,08
Шупашкар	12838	6677	6161	126	154	Владимир	627	9,3	Татьяна	617	10,01
						Андрей	618	9,2	Наталья	572	9,3
						Олег	397	5,9	Ирина	508	8,2
Хуласем											
						Сергей	146	19,5	Елена	93	17,7
						Владимир	64	8,5	Наталья	63	12,0
Çĕмĕрле	1275	750	525	46	53	Александр	60	8,01	Ирина	60	11,4
						Алексей	47	6,2	Светлана	54	10,3
						Игорь	47	6,2	Марина	39	7,4
						Сергей	24	21,3	Елена	21	20,1
						Александр	15	13,6	Ирина	13	12,5
Етĕрне	214	110	104	22	22	Андрей	9	8,2	Светлана	12	11,5
						Евгений	9	8,2	Наталья	11	10,5
						Владимир	8	7,3	Татьяна	8	7,6

Районсем	Шупашкар	4486	2810	1676	71	100	Сергей	210	7,4	Светлана	168	10,1
							Юрий	100	1,78	Елена	128	7,6
							Владимир	174	6,2	Надежда	122	7,2
							Александр	145	5,1	Ирина	102	6,0
							Николай	100	1,78	Татьяна	92	5,4
	Елчӗк	2901	1536	1365	71	79	Сергей	157	10,2	Надежда	127	9,3
							Владимир	145	9,4	Светлана	118	8,6
							Александр	135	8,7	Галина	105	7,6
							Николай	118	7,6	Ирина	103	7,5
							Юрий	117	7,5	Елена	97	7,2
	Патӑрьел	4130	2110	2020	208	205	Владимир	183	8,6	Надежда	121	5,9
							Сергей	175	8,3	Светлана	108	5,03
							Александр	160	7,5	Елена	101	5,0
							Николай	125	5,9	Людмила	88	4,3
							Юрий	102	4,3	Галина	85	4,2

ПРОВЕРЕНО 20__
Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького
26200-чув

2. Заказ № 4910.

хĕрарăмăн обществăри вырăнĕ ӳснине те палăртать.

Пăшăрхантаракан факторсене те асăнма тивет. Пĕрремĕш. Çуралнисен хисепĕ ӳснĕ май ят пĕрешкеллĕхĕ те (урăхла каласан, яташлăх) арçын ячĕсенче ӳссе пырать. Акă Етĕрнере 110 ывăла 22 ят панă (пĕрешкел валеçес пулсан, 5 çынна пĕр ят тивет). Çĕмĕрлере вара 750 ывăла 46 ят (16—17 çынна пĕр ят). Етĕрнесемпе танлашма çĕмĕрлесене 120 ят кирлĕччĕ. Шупашкарсем ятран тата чухăнрах, етĕрнесемпе танлашма вĕсене 1300 ят кирлĕччĕ (126 вырăнне — вунă хут ытларах).

Иккĕмĕш. Мода! Пĕрешкел тумланнă пек, пурте пĕр ят çине тăрăнни. Акă Шупашкартах виçĕ çул хушшинче çуралнă мĕнпур ывăл ачан çуррине ытла (51,2%) пĕтĕмпе те 5 ят кăна тивет (вĕсене таблицăра палăртнă). Çав хушăрах 126 ятран 54-шĕ пĕрер хут кăна тĕл пулать (Алмаз, Аверьян, Бронислав, Всеволод, Демид, Елисей, Никандр, Тарас, Филипп т. ыт. те). Анчах та ят тум марçке! Çипуç пĕрпеклĕхĕ пурнăçра никама та кансĕрлемест. Çипуçа пăхса ĕçе илмеççĕ, качча тухмаççĕ. Награда е выговор панă чухне те çипуçа пăхмаççĕ. Ят вара — пачах урăхла. Шкулта отметкине те ята пăхса лартаççĕ, тетрачĕ çине те, дневникĕ çине те ятна çырмалла. Ĕçе кĕме те ят кирлĕ, шалу илме те, пенсие тухма та — ятсăр ниçта кайса ним тума та çук. Çавăнпа та ят пĕрпеклĕхĕ хальхи пурнăçра тем чул чăрмав кăларса тăратать.

Сăнран пăхсан, хальхи йышлă ятсене нихăш енчен те тиркемелли çук. Сергей, Александр, Владимир, Андрей, Олег, Юрий — пурте янравлă, илемлĕ, калама çăмăл. Елена, Светлана, Татьяна, Наталья, Ирина, Надежда, Людмила, Галина — кусем те çавнашкалах чипер ятсем. Анчах эпĕ те, эсĕ те, виççĕмĕшпе тăваттăмĕш те Сергей пулсан — пĕр-пĕрне епле уйăрса пĕтерĕпĕр. Пĕррехинче «Советская Чувашия» хаçат Етĕрне районĕнчи «Заветы Ильича» колхозри художество пултарулăхне активлă хутшăнакан хĕрсен ӳкерчĕкне пичетленĕччĕ. Хĕрĕсем пурте чипер, кашнин хăйĕн сăнĕ, хăйĕн кулли. Ячĕсем вара тăваттăран виççĕшĕн — Людмила. Ятран чĕнеес те çук вăл хĕрсене пĕрле чух, ирĕксĕрех хушаматпа чĕнес пулать.

Çапла вара, янкăс тум час-час тăхăннипе хăвăрт кивелнĕ пекех, илемлĕ ят та тăтăш тыткаланипе тĕссĕрленсе, якалса каять. Ят пулма пăрахассах çитет. Хамăртан аслисене пичче е аппа, инке тетпĕр, анчах вĕсем ят мар,

чĕнӳ сăмахĕсем çеç. Çавнашкалах кашни 5 ачаран вичçĕшне Сергей тенĕ чух та Сергей ят паллине çухатма пуçлать, ачам, шăллăм евĕр сăмахсем еннелле туртăнма тытăнать.

Хушамат тенĕрен, пирĕн тата вĕсем те уйăрса пĕтерекеннисемех мар, Иванов, Петров, Николаев, Андреев— нумайăшĕ халăх хушшинче ĕлĕкех анлăн сарăлнă ятсенчен пулнăскерсем. Хайхи хушамачĕ те уйăраймасть пире пĕр-пĕринчен, ячĕ те çавăн майлах пулса пырать — мĕнле уйăркаласа çитерĕпĕр? Тахçан пĕри поэтсенчен тăрăхларах çырнă пек, хушаматсем çумне хушмалчăсем хуша-хуша пырсан çеç: Иванов-Тури, Тарасов-Çӳлли, Захаров-Лутри, Ильин-Сарри, Семенов-Кăтри, Павлов-Кайри, Сидоров-Малти... Хушмалчине те хушаяс çук пуль,— пурте çыравçа тухаймăпăр.

Хушамат пирки хальхи вăхăтра çирĕп йĕрке пур, ăна эпир хамăр ирĕкпе суйлаймастпăр: çуралакан ача ашшĕ-амăшĕн хушаматне кăна илет. Ят хунă чух вара ăна суйлама ирĕк пур. Шухăшларах суйлама çеç тăрăшмалла.

ХĂШ ЯТ ЛАЙĂХ?

Чылайăшĕ ачи-пăчине ят хунă чух историре мĕнпе те пулин чапа тухнă çынсен ячĕсене кăмăллани çинчен маларах асăннăччĕ ĕнтĕ. Александр Македонский çар пуçĕн ячĕ, сăмахран, Христос тĕнне йышăннă халăхсем хушшинче çеç мар, мусульман тĕнлисем хушшинче те анлă сарăлнă — вĕсем ăна Искендер е Искандар тенĕ. Искентер формăпа ку ят авалхи чăвашсем хушшинче те çӳренĕ.

Николай Филиппович Ильбеков пĕррехинче çапла каласа парсаччĕ. «Хусанкай, Элкер, Талвир, эпĕ пĕрре Шăмăршă районĕнче пулсаттăмăр — халăхпа калаçрăмăр, хамăр çырнисене вула-вула патăмăр, кашни ялта тенĕ пекех шкул ачисемпе курнăçма тăрăшрăмăр. Çавнашкал тĕлпулусенчен пĕринче çивĕч ăслă шкул ачи Хусанкайăн «Çирĕм улттă» поэмине пĕтĕмпе тенĕ пекех пăхмасăр каласа пачĕ. Савăнса кайнă поэт хайхи ачана хăй патне чĕнсе илчĕ — ăна хăйĕн кĕнекине парнелесшĕн.— Мĕн ятлăччĕ-ха эсĕ?— ыйтать вăл ачаран.— Наполеон!— тавăрать лешĕ. Кĕнекине уçса парне сăмахĕ-

сем çырма хатĕрленнĕ Хусанкайăн кусĕсем ача çине чăрах тинкерчĕç, шӳтлемест-ши ку ача тесе шутларĕ пулас вăл. Аслă поэтăмăрпа унашкал шӳтлесе калаçас чăрсăрлăх çук иккен-ха ачин, ячĕ ун чăнах та çавнашкалахчĕ.— Пулнă-ха ĕлĕкрех кунашкал ят. Чăвашсем ăна Наплюн патша тенĕ. Параппан патша тени те пулнă. Ман та ĕнтĕ «Наплюн шăллăм» тесех çырма тивет пуль. «Наполеон шăллăм» çырма пĕрре те ала çĕкленесшĕн мар,— мăкăртатрĕ Хусанкай. Улăштарчĕ вĕт ӳссе çитсен çав ача хăйĕн ятне, халĕ Николай ятпа чип-чиперех пурăнать».

Чапа тухнă ят та пур чух та вырăна килмест иккен. Ку ята вăл ачан ашшĕ-амăшĕ хăйсемех те хуман пульха: вăл ят ĕлĕкхи чиркӳ календарĕнче пулнă, тĕне кĕртекенни çавна пăхса панă пулас ăна.

Хитре пĕлтерĕшлĕ ят та унăн хуçишĕн пур чух та ăнăçлă пулаймасть. Çын ячĕсене тахçантанпах тĕпчекен В. А. Никонов хăйĕн «Имя и общество» кĕнекинче (М., 1974) çакнашкал тĕслĕх илсе панă: пĕрисем хăйсен тин çуралнă хĕрне Грация (чăвашла чип-чипер кĕлеткеллĕ пике, Илемпи тени пулать) ят панă, хушамачĕпе пĕрле вара хайхи пепке Грация Неумытова пулса тăнă — хаяр сатирик та кун пеккине шутласа тупаяс çук. Сăнĕ-пуçĕпе те, пĕвĕ-сийĕпе те кунашкал хĕр хăйĕн ятне тӳрре кăлармалла ӳссе çитсен татахчĕ-ха. Унашкал пулаймасан? Лутра та сарлака пулса тăрсан? Ят вара ирĕксĕрех çынна култармалли сăлтав пулать вĕт.

Ят енчен чĕлхере çитменлĕх çук. Ĕлĕкхи чиркӳ календарĕсенче арçын ячĕсем икĕ пине яхăн шутланнă. Вĕсенчен нумайăшне халĕ пачах та аса илмеççĕ, анчах та тивĕççĕр маннă çав ятсем хушшинче тĕлĕнмелле илемлисем, янăравлисем пур: Кирилл, Карп, Клим, Лавр, Лаврентий, Марк, Савелий, Филипп, Федот т. ыт. те, т. ыт. те. Вырăс ячĕсем çумне тата ку чухне ют чĕлхесенчен е çĕршывăмăрти ытти халăхсен чĕлхисенчен кĕрекен ятсем хушăнса пыраççĕ: Карл, Алмаз, Тимур, Эдуард, Ирма. Çак ятсем хушшинче авалхи чăваш ячĕсем те нимрен те кая пулмалла мар: Аван, Илетер, Саван, Сетнер, Сарпи, Пинерпи, Савтепи... Таçтан аякран килекен ятсене те тиркеместпĕр пулсан, чăваша чăваш ячĕ илемсĕрлетес çук ĕнтĕ.

Ку чухнехи вăхăтшăн ят тени вăл кашни утăмра тĕл пулаканни мар, сайрараххи лайăхрах. Анчах та сайра ят шыранă чух та çаксене асра тытни пăсмасть.

Пĕрремĕш. Ят илемлĕ, янравлă кăна мар, калама та çăмăл пултăр. Ят кивви е çĕнни ниме те пĕлтермест: кивви те çĕнелет, çĕнни те кивелме пултарать. Вадим, Игорь, Олег акă — авалхи вырăс ячĕсемех, çапах та халĕ питĕ час тĕл пулаççĕ. Радий — çĕнĕ ят, çапах та сайра пĕрре кăна курăнкалать. Ĕлĕкхи вырăс ячĕсем хушшинче çакнашкаллисем пулнă: Авксентий, Анемподист, Феофилакт. Ку ятсене пупсем чăвашсене те панă. Йывăр ятсем вĕсем, кашнинчех вĕсенче чăвашшăн çеç мар, вырăсшăн та калама йывăр сасă пĕрлешĕвĕсем пур (-немп-, -вкс-). Агн, Домн, Крисп, Ксанф ятсем те çавнашкалах. Чиркӳ паракан ятсем хушшинче тата Псой, Сысой ятсем пур. Вĕсене те ырлама çук — пĕрремĕш вырăсла *пес* «йытă» сăмаха аса илтерет, иккĕмĕшĕ чăвашла илемсĕр илтĕнет. Çав вăхăтрах халĕ сайра пĕрре çеç илтĕнекен Никандр, Никодим, Пантелей — çăмăл ятсем.

Иккĕмĕш. Ят ытлашши вăрăм пулмалла мар — вăрăм ят калаçура та, çырура та меллĕ мар. Калаçу хăшхăш вăрăм ята кĕскетме мел тупать-ха, танл.: Альсан Альсанч е Сан Санч — Александр Александрович вырăнне. Çырура вара (документсенче уйрăмах) унашкал кĕскетме юрамасть. Хăш-хăш вăрăм ят вара калаçура та кĕскелесшĕн мар: Варфоломей Константинович, Инокентий Илларионович. Константин Константиновича калаçура Сатин Сатинч тесе кĕскетеççĕ, анчах кунашкал кĕскетӳ ят хуçине килĕшмесен те пултарать.

Пирĕн чĕлхе вăрăм сăмаха килĕштермест, ахальтен мар куллен усă куракан сăмахсенчен ытларахăшĕ — икĕ-виçĕ сыпăклисем (танл.: пах-ча, çу-тă, ку-рать, кура-нать). Çак йĕркене пăхăнни ятра та вырăнлă. Ашшĕ ячĕ вăрăм пулсан, ывăлĕ-хĕрĕ валли кĕске ят пушшех те кирлĕрех. Сăмахран, ашшĕ ячĕ Константин пулсан, унпа Иван, Петр, Марк, Вера, Нина евĕр кĕске ятсем килĕшӳллĕн пĕрлешеççĕ: Петр Константинович, Вера Константиновна. Ашшĕ ячĕ кĕске пулсан, ывăла-хĕре вăрăм ят та тиркевлĕ мар: Геннадий Петрович, Вероника Петровна.

Виççĕмĕш. Хальхи вăхăтра официаллă йĕркепе çынна ячĕ-шывĕпе чĕнесси йăлана кĕнĕ пирки ывăл валли ят суйланă чух çав ят ӳлĕм ашшĕ ячĕ (отчество) вырăнĕнче епле пуласси çинчен те шутламалла. Тин кăна çуралнă ывăл та вăхăт çитсен ар пулать, вăл та ача-пăчаллă пулмалла. Хăш-хăш ятран вара отчество тума меллех мар: Рудольф — Рудольфович, Станислав — Ста-

ниславович ятсем çавнашкал — вĕсен юлашки пайĕсене калама кансĕр. Хăшĕ-хăшĕ тата ачашласа калакан ятсене официаллă ят вырăнне çыртараççĕ: Эдик, Алик. Ачисене ара çитсен еплерех чĕнесси пирки пачах та шутласшăн мар. Вăхăт çитет те — Эдикран Эдик Петрович пулса тăрать. Хăй черечĕпе ун ывăлне, калăпăр, Емельян Эдикович, хĕрне Ирина Эдиковна темелле пулать. Апла та, капла та илемĕ çук. Пĕчĕк ачашăн Эдик, Алик йышши ятсем чиперех, ара çитнĕ çын ятĕнче вĕсем илемсĕр.

Теприсем ачи-пăчи валли ят суйланă чух çав ятран ачашласа каламалли формăсем епле пулни çине те пит тиркесе пăхаççĕ. Людмила ят анлăн сарăлни, сăмахран, çав ятран пулакан формăсем — Люся, Люда, Люсенька, Людочка — кăмăллă пек туйăннинчен те килет пулас. Ҫама мĕнле те, маншăн ку — ята тиркемелли е кăмăлламалли сăлтав мар. Пĕр енчен, хуть те мĕнле ята та ачашласа калама пулать. Акă, тĕслĕхрен: Герасим — Гера, Герася, Рася, Гераня. Чăвашсем ĕлĕкрех ăна Ҫараç тенĕ — калаçура ку та хитре илтĕнет. Герман — Гера, Геруша. Хусанкайăн «Аптраман тавраш␣» романĕнче Германа асламăшĕ Ҫервен тет. Ҫапла та пит илемлĕ.

Тепĕр енчен, ачашламалли ят вăхăтлăх, официаллă ят — ĕмĕрлĕх, вăл, ашшĕ ячĕ пулса, хамăр ачамăр-пăчамăра та куçать. Нумай-нумай ят ачашламалли формăсăрах илемлĕ: Ҫлим, Авдей, Нина, Алла т. ыт. те.

АТТЕСЕМПЕ АСАТТЕСЕН ЯЧĔСЕМ

18-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче патша чиновникĕсем чăвашсене вăйпах православи тĕнне йышăнтарма тытăнаççĕ. Унччен чăвашсем юмăç тĕнне тытса пынă, урăхла каласан, язычниксем пулнă. Анчах юмăç тĕнĕн малашлăх пулман, ăна çĕр çинче пур çĕрте те çĕнĕрех тĕнсем çĕнтерсе пынă: авалхи римлянсен юмăç тĕнĕ христиан тĕнĕпе ылмашăннă. Ҫывăх Хĕвелтухăçĕнчи халăхсем хушшинче ислам çиеле тухнă, тухăçри славянсем хушшинче — православи т. ыт. те.

Ку енĕпе Атăл тăрăхĕнчи халăхсен — чăвашсен, марисен, мордвасен шăпи те улшăнмасăр юлма пултарайман. Хĕвелтухăçĕнчен вĕсем çине ислам тапăнса пынă. Ислам тĕнне йышăнни ку халăхсене ирĕксĕрех, Хусан ханстви тавра чăмăртанса, тĕрекленсе пыракан вырăс çĕршывне хирĕç тăратма пултарнă. Тин кăна Хусан хан-

ствин пусмӑрӗнчен хӑтӑлнӑ чӑвашсене те, марисемпе мордвасене те кун пек малашлӑх илӗртме пултарайман, вӗсен пурнӑҫ интересӗсем Вырӑс ҫӗршывӗ еннелле ытларах туртӑннӑ. Хӑват хушса пыракан Мускав хӳттинче вӗсем те хӑйсем валли тӑнӑҫлӑх шыранӑ. Ҫав вӑхӑтрах Мускав та анчахрах хӑй хӳттине илнӗ ҫак халӑхсенчен шанчӑк ытларах кӗтнӗ. Православи тӗнне вӑйпах йышӑнтарасси шӑпах ҫав шанчӑка ӳстерессипе ҫыхӑннӑ.

Паллах, истори хушнине е патшалӑх интересӗсенчен тухса тӑракан кирлӗлӗхсене шута илсе ҫӗнӗ тӗне куҫасси халӑхшӑн ҫӑмӑл пулман. Ҫӗнӗ тӗн авалтан пыракан йӑла-йӗркесене те улӑштарма ыйтнӑ, пачах урӑх тӗнчекурӑм ҫине куҫма хистенӗ. Чун-хавал та, кӑмӑл-туйӑм та ҫаксемпе килӗшесшӗн пулман. Хапӑлламан халӑх, паллах, ҫӗнӗ тӗне. Анчах мӗн тӑвӑн? Вӑй тени ӑстӑна та улӑштарать, кӑмӑла та пусарать. Сӑмах май каласан, хӑй вӑхӑтӗнче Киев княҫӗсем те хӑйсен халӑхне вӑйпа тӗне кӗртнӗ, тухӑҫри славянсем хушшине те православи ирӗккӗн сарӑлман.

Тӗне кӗрекен халӑха пупсем ҫӗнӗ ятсем пара-пара тухнӑ. Анчах шыва чӑмтаракан кашни ҫын валли уйрӑм ят шырама пупсен вӑхӑчӗ те, кӑмӑлӗ те пулман — ӗҫӗ васкавлӑ пулнӑ. «Ҫаптарнӑ» вара вӗсем ҫын ҫумне аса килнӗрех ятсене: пӗрне Василий, теприне Иван, виҫҫӗмӗшне каллех Василий. Кайран хӑйсемех ҫӗнӗ ят туяннӑ чӑвашсенчен Василий Иванович тесе тӑрӑхлама тытӑннӑ. Ҫапла майпа 18-мӗш ӗмӗрӗн ҫурри тӗлне чӑвашсене тӗне кӗртсе пӗтертӗмӗр тесе отчет тӑратнӑ хайхисем правительствӑпа синода.

Йӑлишӗн кӑна тунӑ ӗҫӗн усси нумаях пулман. Чӑвашсем авалхи йӑли-йӗркисене тытса пынӑ, хӑйсен туррисенех асӑннӑ, кивӗ уявӗсенех уявланӑ, чиркӳсене ҫӳрессӗн пулман. Чиркӗве ҫӳрекеннисем те пуп сӑмахӗсене ӑша хывайман: лешсем ытларах вырӑсла е вырӑсларан чӑвашла «ҫавӑрса хурса» калаҫнӑ. Пуп панӑ ятсене килӗштермесӗр, чӑвашсем хӑйсем хушшинче пӗр-пӗрне кивӗ ятсемпех чӗннӗ. Авалхи юмӑҫ тӗнӗпе православи хушшинчи кӗрешӳ чӑвашсем хушшинче ҫӗр ҫула яхӑн тӑсӑлнӑ.

Ҫапах та пур ҫӗрте те ҫиеле тухайман православи. Вырӑнӑн-вырӑнӑн чӑвашсем хӑйсен авалхи тӗнӗпех юлнӑ, теприсем тата, ҫӗнӗ тӗне куҫса ҫитеймесӗр, каллех кивве таврӑннӑ. Тӗне кӗмен чӑвашсем ытларах Хусан кӗпӗрнинчи Чистай тата Самар кӗпӗрнинчи Пӗкӗлме уесӗ-

сенче пуранна (хальхи Тутар республикин Аксу, Альметьевск, Октябрьск, Чистай районесем). 1912 çул тĕлне тĕне кĕмен чăвашсен хисепĕ 15 пине яхăн шутланнă[1]. Православие йышăнман чăвашсен ячĕсем те авалхисемех юлнă.

— Православие куçнисен ячĕсем вара майĕпенех çĕннисемпе ылмашăнса пынă. Нумайăшне вĕсене чăвашсем хăйсем майлă улăштарнă, тăван чĕлхен кĕввине килтернĕ. Çапла майпа хуллен-хуллен православи тĕнĕпе пĕрле вырăссенчен йышăннă ятсенчен чăваш ячĕсем пула-пула тăнă.

Вăл вăхăтри йĕрке тăрăх (ку йĕрке Октябрь революцийĕ хыççăн чиркĕве патшалăхран уйăриччен çавнашкал пулнă) çуралнă ачана ят хурасси пĕтĕмпех чиркÿ аллинче пулнă. Ачана шыва кĕртекен пачăшкă аллинче ят кĕнеки пулнă, унта çветтуйсемпе чиркÿ хисеплекен сăваплă çынсен ячĕсене çулталăкри кунсем тăрăх календарь йĕркипе çыра-çыра тухнă. Чиркÿ çак календарьти ятсене кăна йышăннă, ачана унта çук ята пама юраман. Тата календарьти ятсене те ачан ашшĕ-амăшĕ хăйсен кăмăлĕпе суйлама пултарайман. Ачана тĕне кĕртнĕ кун календарьте хăш çветтуй ячĕсем тăнă, çавсенчен пĕрне кăна суйлама юранă. Кăмăлĕ çаврăнсан, пуп, паллах, календарьти урăх ята та пама пултарнă. Ун çинчен, сăмахран, Трубина Мархви хăйĕн «Ача чухнехи» повеçĕнче лайăх çырса кăтартнă. Кунта автор ачасене ят хуртарнă чух мĕне кăмăлласа ят суйлама тăрăшнине те, пупсем халăхран епле мăшкăлланине те, мĕн пирки пĕр çемьерех пĕр ятлă çынсем иккĕ-виççĕ пулма пултарнине те лайăх сăнланă.

Çын ятне календарь тăрăх суйлани халăхри ятсен хисепне йышлатнă пулин те, яташсенчен пĕтĕмĕшпех хăтарма пултарайман, мĕншĕн тесен хăшпĕр çветтуйсен ячĕсем календарьте питĕ тăтăш тĕл пулнă (Василий, Петр, Николай, Алексей, Михаил). Иван ята вара чиркÿ календарĕнче 170 хутчен асăннă — акă мĕншĕн ĕлĕкрех чăвашсем хушшинче те Иван чи тăтăш ят шутланнă.

Çапах та ĕлĕкхи вăхăтра чăваш хушшинче ятсен хисепĕ хальхинчен чылай йышлăрах пулнă. Акă тăван ялăмри ватăсен ячĕсенех аса илетĕп. Мĕн тĕрлĕ ят çукши кунта? Арсентий, Герасим, Ксенофонт, Лука, Мирон,

[1] «Наиболее важные статистические сведения об инородцах Восточной России и Западной Сибири, подверженных влиянию ислама». Казань, 1912, стр. 58—65.

Поликарп, Пантелеймон, Михей, Трофим, Клементий, Кирилл, Фома, Парамон, Маркел, Артемий, Леонтий, Еремей, Федот, Тимофей, Ипатий, Игнат, Серафим, Сидор, Наум, Захар т. ыт. те. Паллах, ку ятсем хут ҫине кӑна ҫакӑн пек ҫырӑннӑ. Ял хушшинче вӗсене чӑвашлатса каланӑ: Арҫук, Караҫ, Сонок, Пӑликкар, Пӑнтти, Миххи, Хуми т. ыт. те.

Ҫапла вара, аттесемпе асаттесем икӗ ятпа ҫӳренӗ: хут ҫинче вӗсем пӗр тӗрлӗ ҫырӑннӑ, халӑх ҫинче пӗр-пӗрне тепӗр тӗрлӗ, хӑйсем еверлӗ чӗннӗ. Хут ҫине ҫырӑнакан ят ытларах ят хуҫине хӑйне мар, патшалӑх ӗҫне туса тӑракан тиексене кирлӗ пулнӑ. Ҫавӑнпа та чылайӑшӗ хӑйӗн хут ҫинчи ятне пӗлсех те ҫитереймен. Тата ӑна асра тытма хистекен сӑлтавӗсем те ҫителӗксӗр пулнӑ: алӑра паспорт таврашӗ пулман, ҫӗрне уйрӑм ҫынна мар, яла уйӑрса панӑ, куланайне те ял ҫине хунӑ. Салтака тӑракансемпе сайра пӗрре нуша килнипе хут тутаракансемшӗн кӑна официаллӑ ят кирлӗ пулма пултарнӑ.

Хут ҫинчи ятпа ял ҫинчи ят пӗре килменни чылай ҫӗрте халӗ те сисӗнет. Ял ҫынни паян кун та пӗр-пӗрне ытларах хушаматпа ятран мар, ял ҫинчи ятпа пӗлет.

Пӗтӗмӗшпе илсен, хальхи вӑхӑтра чӑвашсем хушшинче ҫынна хушаматпа ятран-шывран чӗнес йӗрке вӑй илсе пырать. Ҫапах та калаҫура кӑна мар, ҫырура та кунашкал пӗрлӗхлӗ система ҫирӗпленсе ҫитнӗ теме ҫукха. Чӑн та, официаллӑ документсенче (паспорт, метрика, ҫар, комсомол, парти, профсоюз билечӗ т. ыт. те) е, калӑпӑр, суйлавҫӑсен списокӗнче ҫынна хушаматпа, ячӗпе тата ашшӗ ячӗпе кӑна палӑртаҫҫӗ (Краснов Иван Алексеевич). Кӗскетерех ҫырнӑ чух ятпа ашшӗ ячӗ вырӑнне вӗсен малтанхи саспаллисене (инициалсене) палӑртнипех ҫырлахаҫҫӗ (Краснов И. А.). Ҫапах та чӑваш ҫинчен чӑвашла ҫырнӑ чух, уйрӑмах илемлӗ литературӑра, калаҫури пек, ӗлӗкрен пыракан йӗрке тӑрӑх ашшӗпе хӑй ячӗ тӑрӑх та палӑртаҫҫӗ: Ваҫҫа Аниҫҫи, Тимухха Хӗветӗрӗ. Кун пек чух сӑмах йӗрки ҫирӗп: ашшӗн ячӗ малта, ҫыннӑн хӑйӗн ячӗ ун хыҫҫӑн тӑмалла. Ашшӗ ячӗ вырӑнне хушма ят е псевдоним тӑма пултарать: Лапшу Ҫтаппанӗ, Ҫеҫпӗл Мишши, Илпек Микулайӗ. Тепӗр чухне хушаматпа ята та чӑвашла йӗркепе ҫыхӑнтараҫҫӗ: Трубина Мархви, Орлов Васси. Ҫак енчен пӑхсан, Петӗр Хусанкай, Илемпи Юхма тенисем чӑвашла та, вырӑсла та мар. Чӑвашла каласан Хусанкай Петӗрӗ, Юхма Илемпийӗ пулмалла (Ухсай Яккӑвӗ, Юхма Мишши

тенĕ пек), вырăсла — Петр Хузангай, Илемби Юхма, Николай Терентьев.

Ķалаçура халлĕхе ĕлĕкхи йĕрке ытларах та палăрать. Ķуç хыçĕнче çынна ашшĕ ячĕпе, е ăру пуçĕн ячĕпе, е хушма ятпа хăй ятне пĕрлештерсе палăртаççĕ: Лаврен Лекçи, Ķашкăр Микули, Ķукăр Ķуçма. Ķуç умĕнче вара е чĕнӳ сăмахĕсемпе ята пĕрлештерсе (Петĕр пичче, Верук инке, Хуми мучи), е — ятран-шывран (Фома Григорьевич).

ВЫРĂС ЯЧĔСЕН ЧĂВАШ ХУШШИНЧИ СĂН-СĂПАЧĔ

Тĕне кĕртнĕ чух паракан ятсене малтанласа чăвашсем асра хăварма та тăрăшман. Çырулăхпа хут ĕçне ереймен халăх, паллах, çыру вăйне хисеплеме те пултарайман. Анчах пурнăç малаллах шунă, патшалăх ĕçĕ пур çĕрте те шут ыйтнă: çĕр валеçессинче те, суту-илӳре те, парăм тӳлессинче те. Шут ĕçне вара çырулăхсăр туса пыма май килмен. Хут çине çырнă ята асра тытма хистесех пынă пурнăç.

Чылай хушă хут çинчи ятпа пĕрлех чăвашăн килте панă авалхи ят пулнă. Ķу икĕ ят хушшинче нимле çыхăну та пулман. Акă манăн ват асаттене (асаттен аслашшĕне, вăл иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенче çуралнă) хут çине Ксенофонт тесе çырнă, ялта вара вăл Тунюк ятпа çӳренĕ.

Хут çинчи ята асра хăварас тĕллевпе-ши, каярахпа килти ята хут çинчипе пĕрешкелрех илтĕнекеннине суйлама тăрăшнă. Акă хут çинчи ячĕ Иван пулсан, килте ăна Аван е Юман тесе чĕннĕ, Владимира Тимĕр тенĕ, Архип çырăнаканни ялта Эпти пулнă, Савелий çырăнаканни — Сали, Петр çырăнаканни — Пиккук, Христина çырăнаканни — Хĕрпик, Элекçи çырăнаканни ял валли Эхтюк ят туяннă, Евдокия вара ялта Тутти пулса тăнă (Тутти ят Ултутти формăран кĕскелсе те пулма пултарнă). С. В. Элькерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмăри Чаккана та хут çинче Якку пулнăран çав ятпа чĕннĕ пулас («Ķу çын хут çинче Якку ятлăскер, ялта чăвашла Чакка тенĕскер»).

Çапла вара, чăваш çынни икĕ ятпа çӳресси пĕтĕмпех çĕнĕ тĕне куçнипе çыхăннă. Малтанхи тапхăрта (ку тап-

хăр çĕр çула яхăнах тăсăлнă) хут çинчи ятпа ял çинчи ят хушшинче нимле çыхăну та пулман пулсан, каярахпа кулленхи калаçура хут çинчи ятăн формисем çӳре пуçланă: Николай вырăнне Микулай е Кулай, Дмитрий вырăнне Мĕтри е Митюк, Фекла вырăнне Хĕветле е Хĕветюк т. ыт. те.

Хут çинчи ют ята чăвашлатнă чухне ăна тăван чĕлхери пĕр-пĕр сăмахпа çыхăнтарса ăнланмалларах тума тăрăшни те сисĕнет (кунашкал пулăма эпир, чĕлхеçĕсем, халăх этимологийĕ тетпĕр). Акă Авксентий ятран чăвашсем Укçентей тунă (укçа сăмаха асра тытнă ĕнтĕ), Аксинья ятран — Укçи (каллех укçапа çыхăнтарнă), Владимир ятран — Улатимĕр, Никифор ятран Микихвер форма урлă Михĕпер пулса тăнă. Вукол ĕлĕк те сайра ят шутланнă(вăл авалхи грек чĕлхинчи bukolos «кĕтӳçĕ» сăмахран пулнă), калаçура вырăссем ăна хăйсене май ăнланса Укол тенĕ, чăвашсемшĕн вара вăл Мăкăли пулса тăнă. Спиридон ятăн чăвашла формисем хушшинче Ĕçпритунĕ те, Çĕпритунĕ те пур. Кунта пĕрремĕш формине *ĕç* сăмахпа, иккĕмĕшпе *çĕпре* сăмахпа çыхăнтарни тӳрех курăнать. Иван ятран Йăвак форма тунă чух та ăна *йăва* сăмахпа çыхăнтарни иккĕленӳсĕр: *йăвак* — пĕчĕк йăва (*япала* сăмахран *япалак* форма тунă пек).

Православи тĕнĕпе пĕрле йышăннă ятсен калаçури формисем пурте хут урлă кĕмен, паллах. Хут çинчи ятсене пуплевре епле каламаллине нумай чух чăвашсем вырăссенчен илтсе вĕреннĕ, çавна май вырăс ячĕсем чăваш чĕлхине официаллă формăпа мар, вырăс калаçăвĕнчи формăсемпе кĕре-кĕре пынă. Акă *Тимофей* ят чăваш хушшинче *Тимахви* формăпа та, *Тимухха* формăпа та тĕл пулать. Пĕрремĕшĕ вĕсенчен вырăсла *Тимофей* формăран куçнă, иккĕмĕшĕ вара — вырăс калаçăвĕнчи *Тимоха* формăран. Чăвашла *Мĕтри* те вырăсла *Димитрий* тенинчен мар, халăхри *Митрий* формăран кăна пулма пултарнă. Çавнашкалах вырăсла *Николай* тенинчен чăвашла *Миккулай* йĕркеленет, вырăс калаçăвĕнчи *Микола* формăран — *Микула* е *Миккул.*

Хут çинче *Алексей* çырăнакан ятăн чăвашла формисем вуннăран та иртеççĕ: *Элекçей, Элекçи, Лекçей, Алюшка.* Кашниннех вĕсен хăйĕн «ашшĕ» (е, наукăри пек каласан, прототипĕ) пур. *Элекçей, Элекçи* формăсем *Алексей* формăран йĕркеленеççĕ: *Лекçей*—вырăс калаçăвĕнчи *Лексей* формăран, *Алюшкийĕ* вара — *Алешка* формăран.

Вырăс чĕлхинче ятсен расна формисем тĕрлĕ сăлтавсене пула çуралнă. Пĕр чухне вĕсем ют сăмаха халăх калаçăвĕн кĕввине килтерес туртăмпа çыхăннă: *Иван, Семен, Ульян, Устин — Иоанн, Симеон, Иулиан, Юстин* вырăнне. Сăмах май каласан, чиркÿ календарĕсем чылай хушă çакăн евĕр формăсене кăна канон вырăнне йышăннă, ыттисене тиркенĕ. Қаярахпа халăх хушшинче çÿрекен формăсене те чылайăшне чиркÿ календарьне кĕртме тивнĕ, мĕншĕн тесен халăхра та, çырулăхра та анлă сарăлса, вĕсем литература норми пулса тăнă (*Иван, Семен, Ульян, Устин* формăсем шăпах çакăнта кĕреççĕ). Специалистсем пĕрремĕшĕсене канон ятсем, иккĕмĕшĕсене литературăри ятсем теççĕ. Литература нормин шайне çитеймен ятсем те пур, кусемпе калаçура анлăн усă кураççĕ, анчах та документсем çине çырмаççĕ (*Настасья, Марья, Қатерина, Лизавета — Анастасия, Мария, Екатерина, Елизавета* вырăнне). Специалистсем кусене калаçури ятсем теççĕ[1]. Қалаçури ятсем ытларах чух калаканнин кăмăлне палăртаççĕ (ун пек чух вĕсене *квалитатив* теççĕ): ачашлăха (*Ванечка, Ванечек, Ванюша, Ванюра* — кусене *деминутив* теççĕ), юриех ÿстернине (*Иванище, Силантище* — кусем *аугментативсем*), тиркенине-кăмăлламаннине (*Ванька, Васька, Дуська* — кусене *пейоратив* теççĕ)[2].

Вырăсран йышăннă кулленхи калаçури ятсем хушшинче çакăнта асăннă ушкăнсене кĕрекеннисем пурте пур — канон ятсем те, литературăри ятсем те, калаçурисем те. Акă *Георгий* ĕлĕкхи чиркÿ календарĕшĕн канон ят шутланнă. Чăваш калаçăвĕнчи ку ят *Кĕверки е Юрки* пулса тăнă. *Георгий* ятăн вырăс калаçăвĕнчи форми — Егор (каярахпа календарьте Георгипе Егор икĕ расна ят пулса тăнă), чăвашсем унтан *Якур* тунă. Чăвашла *Наçтуç, Наçти, Наçтá, Наçтук* формăсем те документсенче çырăнакан Анастасия формăран мар, вырăс калаçăвĕнчи *Настусь, Настя* формăсенчен пулнă.

Çапла вара, чăваш калаçăвĕнчи вырăс ячĕсем чĕлхене яланах хут урлă кĕрсе чăвашланман, нумай чухне чăвашсем вĕсене вырăс калаçăвĕ урлă йышăннă. Çакна шута илмесĕр, чăвашланнă вырăс ячĕсен пулăвне тĕрĕс ăнлантарма май çук.

---

[1] *Б. А. Успенский.* Из истории русских канонических имен. М., Изд-во МГУ, 1969, стр. 5—6.

[2] *Н. В. Подольская.* Словарь русской ономастической терминологии. М., «Наука», 1978, стр. 69—81.

Хут ҫинче *Емельян* ҫыракан ята (унăн авалхи канон форми *Емилиан* пулнă) чăвашсем *Емелен* е *Емел* тенĕ. Ытти формисем те пур ку ятăн, анчах та, калаҫăва аяккалла ярас мар тесе, вĕсене халлĕхе асăнар мар-ха. Ҫак икĕ формăн прототипĕсем те расна: *Емеленĕ — Емельян* формăран, *Емелĕ* вара — вырăс калаҫăвĕнчи Емеля формăран. Хут ҫине иккĕшне те пĕрешкелех Емельян ҫырнине пула кăна чăвашсем *Емеленпе Емеле* пĕр ят тесе шутланă. Каласури тĕрлĕ вариантсене пĕрлештерсе хут ҫине ҫыракан пĕр форма пулас пулмасан, халăх ăстăнĕшĕн, сăмахран, *Йăван, Иванюк, Йăванкка, Ванькка́* (анатрисем евĕрлĕ), *Ванюш* пурте расна ятсем шутланĕччĕҫ. *Емеленпе Емел* пирки те ҫавнах калас пулать.

Мĕнлерех улшăннă-ха вырăс ячĕсем чăваш калаҫăвĕнче? Ҫав ятсем чăвашланни еплерех палăрать?

Пысăкрах улшăнусенчен ҫаксене палăртса хăварас пулать.

1. Чăваш калаҫăвĕ хăнăхман сасăсемпе вĕсен пĕрлешĕвĕсенчен хăтăлма тăрăшнă, вĕсене тăван чĕлхери хăнăхнă сасăсемпе ылмаштарнă, тĕслĕхрен: *Федора—Хветӳри, Фекла — Хĕветли, Евграф — Якрав, Гордей — Курти, Данила — Таниле, Захар — Сахáр, Ефрем — Ехрем, Леонид—Лянанит, Леонтий—Левентти* т. ыт. те. Сăмах пуҫламăшĕнчи *р* сасса ĕлĕкрех чăваш чĕлхи килĕштермен, ҫавна пула ун умне уҫă сасă кĕртсе лартнă. Хайхи вара *Родионран Ăртиван, Романран Ăраман* пулса тăнă (танл.: *родня — ăратне, ряд — ĕрет*). Сăмах пуҫламăшĕнче чăваш чĕлхишĕн хупă сасăсен пĕрлешĕвĕ те килĕшӳллĕ пулман, ҫавăнпа малтанлăха калаҫу ҫавнашкал хупă сасăсене уҫă сасăсемпе уйăрма тăрăшнă *(Спиридон — Ҫĕпритун)* е хупă сасă пĕрлешĕвĕ умне уҫă сасă кĕртсе лартнă *(Степан — Ăҫтаппан;* К. В. Ивановăн пĕр сăввинчи йĕркесенех аса илер: Уй хĕрринчи Ăҫтаппан сарай ҫинчен юр тăкать). Хăшпĕр хупă сасăсен пĕрлешĕвне пирĕн чĕлхе сăмах вĕҫĕнче те килĕштермен, ҫавăнпа *Петр* чăвашла *Петĕр* пулса тăнă. Ҫапах та хупă сасăсен пĕрлешĕвне калама чĕлхе майĕпенех хăнăхса пынă, ҫавна май чылай ятсенче ҫав пĕрлешӳсем улшăнмасăрах юлнă: *Платон — Платтун, Трофим — Трахвин, Трифон — Трихвăн.*

2. Чĕлхери ытти сăмахсем пекех, ятсене те чăваш калаҫăвĕ сингармонизм законне пăхăнтарма тăрăшнă, чылай ятсен сăн-сăпачĕ улшăнни шăпах ҫакăнтан килет. Тĕслĕхрен: *Иван — Йăван, Игнат — Йăкăнат, Семен —*

Çемен, Федор — Хĕветĕр, Ефросиния — Евреççи т. ыт. те. Анчах ку туртăма та чĕлхе вĕçне çитиех тытса пырайман, пĕр енчен, хамăр чĕлхере те сингармонизма пăхăнман тĕслĕхсем сахал мар, тепĕр енчен, çĕнĕрен йышăнакан ячĕсем те йышлă пулнă, пуплевре вĕсем тăтăш тĕл пулнă. Тата унччен ятсенче те сингармонизм йĕрки вĕçĕмех пăсăлса пынă (танл.: *Тутимĕр, Нарспи, Мултиер* т. ыт. те). Çак сăлтавсене пула вырăсларан йышăнакан ятсем те сингармонизм енĕпе ытларахăшĕ чăвашланман (*Курмил, Мирун, Митрахван, Кĕркури, Тихăн, Михала, Микула* т. ыт. те).

3. Чылай ятсем чăваш калаçăвĕнче вырăслинчен кĕскерех илтĕнекен пулнă, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхи вăрăм сăмахсене тиркет, ик-виç сыпăкран тăракан сăмахсене килĕштеререх парать. Танл.: *Поликарп* (3 сып.) — *Пликкар* (2 сып), *Пелагея* (4 сып.) — *Пăлаки* (3 сып.), *Ефросиния* (5 сып.) — *Евреççи* (3 сып.), *Варсонофий* (4 сып.) — *Варсун* (2 сып.), *Пантелеймон* (4 сып.) — *Пăнтти* (2 сып.), *Акулина* (4 сып.) — *Кулине* (3 сып.), *Василий* (3 сып.) — *Васли* (2 сып.), *Ипатий* (3 сып.) — *Патти* (2 сып). Çăн та, вырăсларан йышăннă ятсем хушшинче кĕскисене вăрăмлатнă тĕслĕхсем те пур, сăмахран, *Семен — Çимукка, Кирилл — Кириле, Лев — Лява, Петр — Петĕр, Роман — Ăраман, Федор — Хĕветĕр.* Ку пулăмăн сăлтавĕсем тĕрлĕрен. Вĕсенчен хăшпĕрисене маларах асăнтăмăр. *Семен* ятран мĕн пирки чăвашла *Çимукка* пулни çинчен кăшт каярах калăпăр.

4. Авалхи вырăс ячĕсенчен чылайăшĕ арçыншăн та, хĕрарăмшăн та пĕрешкелех пулнă, пĕр-пĕринчен вĕсене вĕçне пăхса çеç уйăрнă: арçын ячĕсем ытларах чух хупă сасăпа, хĕрарăм ячĕсем уçă сасăпа вĕçленнĕ. Сăмахран: *Агний — Агния, Александр — Александра, Анастасий — Анастасия, Анисий — Анисия, Антонин — Антонина, Валентин — Валентина, Валерий — Валерия, Юлий — Юлия,* анчах: *Агриппа* (арç. ячĕ) — *Агриппина* (хĕрарăм ячĕ). Чăваш чĕлхинче ят форми тăрăх вăл арçынна е хĕрарăма палăртнине пĕлме çуккине шута илсе-ши, пупсем кунашкал ятсене чăвашсене парсах кайман. Е иккĕшĕнчен пĕрне кăна суйласа илнĕ. *Агния, Анастасия, Анисия, Антонина, Валентина, Юлия, Агриппина,* сăмахран, чăвашсем хушшинче хĕрарăм ячĕсем кăна шутланнă. Александр вара ытларах арçынна тивнĕ.

Ĕлĕкхи арçын ячĕсенчен чылайăшĕ *-ий* тата *-ей* сыпăксемпе вĕçленет. Çак сыпăксем иккĕшĕ те чăваш ка-

лаçăвĕнче *-и* сасăпа ылмашăççĕ: *Григорий — Кĕркури, Леонтий — Левентти, Терентий — Терентти, Арсентий — Арçентти, Василий — Ваçли, Лаврентий — Лаврентти, Меркурий — Мерккури; Андрей — Унтри, Гордей — Курти, Матвей — Матви, Михей — Миххи, Тимофей — Тимахви.* Ку ылмашăвăн сăлтавĕ пур: тури диалектра тăванлăха пĕлтерекен сăмахсем, *-и* аффикс йышăнса, чĕнӳ пĕлтерĕшлĕ пулса каяççĕ, танл.: *ати, апи, пичи, кукаçи, куками, инки, мучи, кинеми.* Çын ячĕсен те чĕнӳ функцийĕ пур, çавна май вĕсем те тăванлăх сăмахĕсен модельне йышăнма тăрăшаççĕ, вĕсенче те юлашки *-и* сасă чĕнӳ аффиксĕ вырăнĕнче çӳреме тытăнать. Анатри калаçура чĕнӳ пĕлтерĕшĕпе тури *-и* аффикс вырăнне *-ей* аффикс çӳрет (танл.: *кукамай, кукаçей, кинемей, мучей, тетей*), çавăнпа та ку калаçура асăннă ятсем чылайăшĕ вĕçĕнче *-ей* сыпăклă пулса тăраççĕ: *Терентей, Левентей, Элекçей, Энтрей.* Хăш чух *-ей* аффикса ят вĕçĕнчи *-ей* е *-ий* сыпăксем вырăнне мар, çĕнĕрен те хушса хураççĕ: *Артем — Уртемей, Семен — Çемеккей.*

Хĕрарăм ячĕсем те *-йа* сыпăкпа вĕçленнĕ чух тури калаçура чылайăшĕ çав сыпăка *-и* сасăпа ылмаштараççĕ: *Пелагея — Пăлаки, Авдотья — Ултутти, Мария — Мари, Дария — Тари, Калерия — Калери, Агафия — Укахви, Таисия — Таççи.* Çын ячĕсене чĕнӳ формиллĕ тăвас туртăм тури калаçура чылаях пысăк пулнă курăнать, çавна пула хăш-хăш чух ят вĕçĕнчи сыпăкра *й* хупă сасă çук пулсан та, ятне хăйне чĕнӳ формине килтерни тĕл пулать: *Федора — Хетӳри, Валентина — Валентти, Фекла — Хĕветли.* Апла пулсан, ят вĕçне *и* уçă сасă килсе тухнине пур чух та фонетика урлă ăнлантарма май килмест.

Çапах та ку туртăм та ятсенче вĕçне çитиех пурнăçланса пыраймаи, мĕншĕн тесен ăна чĕлхери ытти туртăмсем хирĕçленĕ. Акă сингармонизм законне пăхăнтарас туртăма пула анатри калаçура тĕллĕн-тĕллĕн *Настá, Праскá, Таççá* (тури *Таççи* вырăнне) формăсем çирĕпленнĕ. Анатри калаçурах тата вырăсран йышăнакан хĕрарăм ячĕсене унччен ĕлĕкрех араб чĕлхинчен йышăннисен евĕрне килтерме тăрăшни те сисĕнет: *Матĕрне, Марине* (*Мария* ятран, *Марина* ятран мар!), *Урине, Кĕтерне, Чинавье* (*Зиновия* ятран), танлаштарăр: *Селиме, Велиме, Серине, Тахмине, Хапике, Хемите.*

5. Йышăнакан ятсене чăвашсем ударени енчен те тăван чĕлхене пăхăнтарнă, ударение ялан тенĕ пекех ятри

юлашки тулли уҫӑ сасӑ ҫине ӳкерме тӑрӑшнӑ. Танл.: *Арсе́ний — Арҫенѝ, Ана́ний — Ананѝ, Гаврѝла — Кавӑрле́, Данѝла — Танилѐ* е *Танилла́, Никѝфор — Микихве́р т. ыт. те.* Ку туртӑм анатри чӑвашсен калаҫӑвӗнче уйрӑмах вӑйлӑ палӑрать, ҫавӑнпа вӗсем халӗ те деминутивсене *Куля́, Туля́, Ваня́, Валя́* теҫҫӗ, тулли ятсене те тепӗр чух ҫак йӗркене пӑхӑнтараҫҫӗ *(Нина́, Вера́)*. Тури калаҫура вара хальхи вӑхӑтра ку ятсем вырӑс чӗлхинчи пекех илтӗнеҫҫӗ — *Ко́ля, То́ля, Ва́ня, Ва́ля, Нѝна, Ве́ра.* Ҫакна та палӑртмалла: кун пек ятсенче турипе анатри калаҫура ударени ҫеҫ мар, уҫӑ сассисем те расна, танл.: *Куля́ — Ко́льӑ.*

6. Ят пуҫламӑшӗнчи *а* уҫӑ сасӑ чӑваш чӗлхинче *у* тата *э* сасӑсемпе ылмашать, танл.: *Абрам — Упрам, Анисим — Униҫӗм, Артем — Урттем, Александр — Элексантӑр, Алексей — Элекҫи, Антип — Энтип, Архип — Эрхип.* А сасӑ вырӑнне *э* каласси сингармонизмран килнӗ пулас (акӑ *Унтри* тата *Энтри* вариантсем пӗр-пӗринчен сингармонизма пӑхӑннипе пӑхӑнманни тӑрӑх ҫеҫ уйрӑлаҫҫӗ), анчах та мӗншӗн *а* вырӑнне *у* калама тӑрӑшни паллӑ мар. Ҫав вӑхӑтрах ят пуҫламӑшӗнчи *а* сасса ҫав халлӗнех хӑварнӑ тӗслӗхсем те сахал мар *(Агафон — Акахвун, Ананий — Анани, Антон — Антун, Арсений — Арҫени).*

Малтанлӑха чӑваш ӑстӑнӗшӗн вырӑсран йышӑнакан ятсем, паллах, пӗлтерӗшлӗ сыпӑксем ҫине пайланма пултарайман. Урӑхла каласан, *Ванюк, Ванюш, Ванюра, Ванька* формӑсем аффикссӑр сӑмахсем пек курӑннӑ, вӗсенче *-ук, -уш, -ура, -ка* аффикссем пурри сисӗнмен. Аффиксӗсем уйрӑлманнине пула вӑл ятсенче пӗрешкел тӗп пурри те палӑрман. Қашни ячӗ пӗтӗм кӳлепипе уйрӑм ят пек туйӑннӑ. *Петӗрпе Петюк* та, *Марипе Маруҫ* та ҫавнашкалах пулнӑ. Ҫапах та майӗпен ҫак ятсенче чӑвашсем тӑтӑшрах тӗл пулакан пӗлтерӗшлӗ сыпӑксене уйӑра пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтрах ют сӑмахри аффикссен пӗлтерӗшӗсем ӑстӑна вырнаҫайман, *Митька* формӑри *-ка* аффиксӑн пӗлтерӗшӗ те, *Васек* формӑри *-ёк* аффиксӑн пӗлтерӗшӗ те чӑвашшӑн пӗрешкелех пулнӑ — чӑваш ӑстӑнӗ йышӑнакан ятсенче тӗл пулакан аффикссене пурне те ят тумалли элемент вырӑнне хунӑ. Ҫавӑнпа та чӑвашсем ку аффикссене ят ҫумне вырӑс чӗлхинчи пек мар, хӑйсене евӗр хушма тытӑннӑ.

Акӑ *Ваҫҫук, Миттюк* чӑваш ячӗсенче *-ук* аффикс вырӑс ячӗсенчи пекех (танл. Васек, Митек). *Ванюк, Санюк, Сашук* ятсем те ҫавнашкалах вырӑсла формӑ-

сенчен куçнăскерсем. *Иванюк, Ивук, Кирук* (Кирилл ятран), *Çерук* (Сергей ятран), *Арçук* (Арсений ятран), *Ултук* (Авдотья, чăв. Ултутти ятран), *Энтрук* (Энтри ятри тымартан) ятсене вара чăваш чĕлхи хăй йĕркеленĕ, вырăс чĕлхинче *-ок* аффикс вăл тĕпсем çумне хушăнмасть (вырăсла *Ванек* пур, *Иванек* — çук, *Кирюша* пур, *Кирёк* çук т. ыт. те). Маларах асăннă *Çимукка* ят чăваш чĕлхинче çапла йĕркеленнĕ: чĕлхе туйăмĕ *Çемен* ятран малтан *çем* — тымар уйăрнă, ун çумне *-ук* аффикс хушнă, ун хыççăн *-ка* аффикс — *Çим+ук+ка.*

Маруç ятшăн вырăсла оригинал пулнă — *Маруся.* Çак ятран уйăрнă *-уç* аффикспа чăваш чĕлхи каллех хăйне май усă курма тытăнать, вырăс чĕлхи ку аффикспа каламан ятсем çумне те чăваш чĕлхи ăна çăмăллăнах хушса хурать: *Таруç, Ивуç* (танл. Иван), *Йăкăнуç* (танл. Йăкăнат), *Кируç* (танл. Кирле), *Элуç* (танл. Элекçи), *Микуç* (ку ят Мики<Никита, Никифор ятри тымартан та, Микулай ятри тымартан та пулма пултарнă).

Ваçинкка, Кĕçтинкка, Мишанкка ятсем чăвашра вырăсран куçса йĕркеленнĕ, вĕсен вырăсла оригиналĕсем *Васенька, Костенька, Мишенька.* Ку ятсенчи *-инкка* аффикс вырăс ячĕсенчи *-енька* аффикса пула йĕркеленни тӳрех курăнать. *Ваçинккаран* сингармонизм туртăмне пула *Ваçанкка* йĕркеленет. Пĕрре чăмăртаннă аффикса вара чăваш чĕлхи, вырăс чĕлхине пăхмасăрах, ытти тĕпсем çумне хушма тытăнать: *Куçинкке, Куçинкки, Куçинкка* (хут çинче виççĕшĕ те *Кузьма* çырăннă), *Макçинкка* (хут çинче *Максим;* калаçура *Макçă, Макçи* формăсем пулас пулмасан, *Макçинкка Макçăмкка* формăран пулнă теме те пулĕччĕ), *Çуманкка* (хут çинче Семен), *Алянкка* (хут çинче Алексей), *Арçинкка* (хут çинче Арсений), *Петренкке* (хут çинче Петр) т. ыт. те. Унтан та ытларах, *-инкка* аффикс (унăн *-инка, -анкка, -анка* вариантсем пулма пултараççĕ) авалхи ятсем çумне те хушăнма тытăнать: *Лĕхтинкка́* (Х. Уярăн «Таната» романĕнчи пĕр персонажăн ячĕ), *Ватинкка́, Люçинкка́* (вырăсла Люсенька тенинчен мар, *Люç* авалхи чăвашсен арçын ячĕ пулнă), *Савринка́.*

Вырăссем *Ваня* формăран иккĕмĕшле ят тăваççĕ — *Ванюра,* ун çумне тепĕр аффикс хушса, *Ванюрка* пулать. Чăвашсем юлашки формине кăшт улăштарарах *Ванеркке* тенĕ. Хут çинче ку ят та *Иван* çырăннă. Хушаматра вăл çав халлĕнех *Ванеркке* пулса юлнă.

Хут çинче *Андрей* çыр̆анакан ят халăх хушшинче

Энтрун формăпа та тĕл пулать. *Энтри, Энтук, Энтрук* формăсемпе танлаштарсан, *Энтрун* формăра чăвашсем *-ун* аффикс уйăрни курăнать. Кунашкал аффикс чăваш чĕлхинче *Çимун, Мирун, Антун, Хритун* ятсем урлă çуралма пултарнă. Тепĕр майлă каласан, çак ятсенчи *-ун* сыпăка ят тăвакан аффикс тесе ăнланнипе, *Энтри* ятăн тĕпĕ çумне те *-ун* хушма пултарнă. Урăхла ăнлантарма та май пур: чăвашсем патне вырăссенчен Петруня, Сергуня йышши ятсенчи модель те çитме пултарнă. Ку модельре *-ун* аффикс пур. Чăн та, хут çинче *Петр, Сергей* çыракан ятсен *Петрун, Çеркун* формисене чăваш хушшинче халиччен тĕл пулман эпĕ (ман куç умне лекменни вĕсем чăвашра пулман тенине пĕлтермест, паллах), çапах сайра пĕрре кăна тĕл пулакан Ванюркка модель те чăваш хушшине лекме пултарнă пулсан, тăтăшрах çӳрекен *Петруня* модель çитме пултарни иккĕлентерме кирлĕ мар.

Александр ятăн халăхри пĕр форми *Элеккин. Элек, Элекка* (кусене те çав ятпа çыхăнтарнă) формăсемпе танлаштарсан, *Элеккин* (е *Элеккен* — ку та пур) формăра *-ин* аффикс уйăрма пулать. Ку аффикс вара вырăс калаçăвĕнчи *Савин* ятра пур (хут çинчи *Савва* ятран), чăвашсем те ăна калаçури *Савин* формăпа йышăннă. Кунсăр пуçне, *-ин* сыпăкпа вĕçленекен ытти ятсем пулни те (*Уçтин, Алтаккин* — Евдоким ятран, *Кĕçтенттин* — *Константин* ятран) ăна аффикс тесе ăнланма хистенĕ. *Элеккен* форми вара *Емелен* (*Емельян* ятран) йышши ятсен евĕрĕпе çуралнă.

Арсений (е *Арсентий*) ятăн чăваш хушшинче *Арçик, Арçикки* формисем пур. Иккĕшĕнче те *-ик* аффикс уйăрлать. Анчах та вырăс чĕлхинче *-ик* аффикс ку ятпа çӳремест, справочниксем кăтартнă тăрăх вăл *Арефий, Ариан, Арий, Арикс, Арион, Аркадий, Архип* ятсен пĕчĕклетӳ форми шутланать[1]. Чăваша *-ик* аффикс каллех урăх ятсем урлă куçма пултарнă (танл.: *Толя — Толик, Слава — Славик*).

Вырăс чĕлхинче *Мария* ятăн *Марись* форми те çук. Чăвашсен вара *Мариç* пур, Х. Уярăн «Таната» романĕнче те тĕл пулать вăл. *Мариç* пирĕн чĕлхере е вырăсла *Мариша* тенинчен пулма пултарнă, е тата урăхларах, ытти ятсен калăпне пăхăнса йĕркеленнĕ.

---

[1] *Н. А. Петровский*. Словарь русских личных имен. М., 1966, стр. 249.

Вырăс чĕлхинче хут çинчи официаллă ятран пулнă иккĕмĕшле ятсен кашнин хăйне тивĕçлĕ пĕлтерĕш пур, пурте вĕсем мĕн енчен те пулин ята калаканнин кăмăлне палăртаççĕ, танл.: *Ваня — Ванечка, Ванюша* (ачашшăн асăнни), *Ванька* (тиркесерех асăнни), *Иванище* (пысăклатни) т. ыт. те. Çав пĕлтерĕшсене ятсенче уйрăм аффикссем палăртаççĕ: *-ечк, -ушк, -ух, -уш, -ище* т. ыт. те. Унашкал пĕлтерĕшлĕ аффикссем вырăс чĕлхинче пайăр мар ятсен те пур, танл.: *мама — маменька, мамочка; дом — домик; изба — избушка, цветок — цветочек* т. ыт. те. Шăпах пайăр мар ятсенче çавнашкал пĕлтерĕшсене палăртма пулни вырăс чĕлхине çын ячĕсенче вĕсене уйăрма май парать.

Чăваш чĕлхинче пайăр мар ятсен ун пек пĕлтерĕш çук, çавăнпа та вырăсларан йышăнакан çын ячĕсенче те чăвашсем вĕсене асăрхама пултарайман. Аффиксĕсем ятсенче çапах та куçа курăннă, анчах та чăвашсем вĕсене пурне те пĕрешкелех сăмах тăваканнисем шутне кĕртнĕ.

Вырăсларан йышăннă ятсен чăваш калаçăвĕнчи формисем çав тери йышлă. Вĕсенче тăван чĕлхери тĕрлĕ пулăмсем, тĕрлĕ тӳртăмсем палăраççĕ. Икĕ чĕлхе хушшинчи çыхăну епле аталанса пынине ăнланас тĕлĕшпе те вĕсем паха материал шутланаççĕ. Апла пулин те, ку ятсене халиччен ятарласа пухман та, тĕпчемен те. Вĕсем çинчен эпир кунта калани — пуçламăш сăмах çеçха. Кунта шухăшлаттараканни те, чĕлхери ытти фактсемпе танлаштармалли те пайтах.

Хут çинчи ятăн калаçури варианчĕсем мĕн чухлĕ пуласси унăн тăтăшлăхĕнчен те, тытăмĕнчен те, çав ят вырăс калаçăвĕнче мĕнле-мĕнле формăсемпе çӳренинчен те килнĕ. Тăтăш ятсен вырăс калаçăвĕнче те варианчĕсем йышлă пулнă. Пензăри тĕпчевçĕсем шутланă тăрăх, вырăс калаçăвĕнче, сăмахран, Анна ятăн 70 яхăн, Александра ятăн 80 майлă, Иван ятăн 100 ытларах вариант тĕл пулать[1].

Чăваш хушшинче *Афанасий, Александр, Алексей, Иван, Мария, Лаврентий, Кузьма, Агафья* тата ытти нумай ят йышлă вариантлă пулнине палăртма пулать.

Афанасий ятăн, сăмахран, халăхра çакнашкал ятащĕсем тĕл пулаççĕ: *Ахваниç, Ахванеç, Ахвань, Ухванеç,*

---

[1] *А. В. Суперанская.* Структура имени собственного. Фонология и морфология. М., 1969, стр. 127.

Аваççи, Ахванаç, Ахванкка, Ахваç, Ахвун, Ахвункка, Ахун, Ахун, Уккаç, Ухвар, Ухваркка, Ухванаççи, Ахванюк, Ухвантер (ку шута тури диалектра *у* вырăнне о-па калаканнисене кĕртмен). Хăшĕ-пĕри вĕсенчен православи тĕнне йышăничченхисем те пулма пултарнă. *(Ахваç, Ахун, Ухвар)*, каярахпа çеç вĕсене вырăс ячĕсемпе пĕр килтернĕ.

Тĕрлĕ çĕрте хут çинчи *Мария* вырăнне çак яташсем çӳреççĕ: *Мари, Мариç, Маруç, Маруççá, Марье, Марине, Марче, Марчук, Марук, Машук, Машшук, Маня́, Маняккá, Манюк, Манюç, Манькка, Манюкка, Маюк, Майкá* т. ыт. те. Ман- тымарлă вариантсем Манефа яташĕсем пек те çӳреме пултараççĕ. Çав вариантсенче сăмах тăвакан тĕрлĕ аффикс уйăрма пулать. Çав вăхăтрах ят тымарĕ те улшăнмасăр юлмасть *мар-, маш-, ман-, май-*.

Çакăн евĕр ятсем хут çинче пĕр официаллă формăпа çыхăнман пулсан, чăваш ăстăнĕшĕн кашниех уйрăм ят шутланмаллаччĕ ĕнтĕ. Хут çинче пĕр ятпа çыхăнни вара вĕсене пурне те пĕр ятăн тĕрлĕ форми тесе ăнланма хистет. Қапла ăнланни асăннă вариантсенче ят тымарĕпе ят тăвакан аффикссем уйăрма хушать. Çапла вара, ятсене çырулăх урлă йĕркелени çыннăн чĕлхе туйăмне те урăхлатать.

Çын ячĕсенче уйрăлма тытăнакан аффикссем пайăр мар ятсенче пулмасан та пултараççĕ, вĕсем нумай чухне пайăр ятсен картинчех юлаççĕ, ун тулашне тухмаççĕ. Акă çын ячĕсенче тăтăш тĕл пулакан *-ук* аффикс (унăн çемçе варианчĕ тĕл пулмасть) пайăр мар ятсенче пачах та çук. Ытти аффикссем те чылайăшĕ çавнашкалах. Хăшĕ-пĕри çеç пайăр мар ятсенче тĕл пулать, танл.: *шыв — шыв-ак, йӳçĕ — йӳçек* тата *Куçак* (Кузьма ятран), *Яштак, Ярак, Çарак* (авалхи ятсем).

Тымар морфемăсем енĕпе вара çын ячĕсем, ытти пайăр ятсем пекех, пайăр мар ятсенчен пушшех те уйрăлса тăраççĕ. Пайăр мар ятра тымар морфемăн пĕлтерĕшĕ ытларах чухне уçăмлă (танл.: *пурлăх, пахчаçă, кĕтӳ, тухăç)*, пайăр ятсенчи тымар морфемăн пĕлтерĕшне ятарласа тĕпчесен те пур чух та тупма çук. Пĕтĕмĕшпе илсен, пайăр ятсем фонетика енчен те, морфологи енчен те пайăр маррисенчен чылай уйрăм тăраççĕ. Қу уйрăмлăхсем, тĕпрен илсен, вĕсен семантикинчен тухса тăраççĕ: пайăр мар ятсен пĕлтерĕшĕ ăнлава палăртассипе çыхăннă пулсан, пайăррисем ăнлава мар, пĕр-пĕр ушкăна пĕрлешекен уйрăм япалана кăтартаççĕ.

Вырăсларан куçса чăвашланнă çын ячĕсем чăваш пурнăçĕпе тăван чĕлхемĕрте паллă тапхăр шутланаççĕ. Ку ятсем авалхи чăваш ячĕсемпе те тачă çыхăннă, хăш чух вĕсем пĕр-пĕринпе хутăшса та кайнă: вырăсларан йышăннисем авалхи ятсем майлă евĕрленнĕ, авалхисем вырăсларан йышăннисен калăпне кĕре пуçланă. Çавăнпа та, вырăсларан куçнă ятсене тĕплĕн тишкермесĕр, нумай чух авалхи ятсен тытăмĕпе пулăвне те ăнланма çук.

МĂН АСАТТЕСЕН ЯЧĔСЕМ

Ку ятсем шутне чăвашсем православи тĕнне йышăниччен хисем кĕреççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем ытларах ял ячĕсенче, хушаматсенче сыхланса юлнă. Авалхи пурнăçа сăнланă чухне вĕсемпе писательсемпе поэтсем анлăн усă кураççĕ. Православи тĕнне йышăнман чăвашсен ку ятсем паян кун та сахал мар.

Чăваш хушшинче пур çĕрте те çын ятĕнчен пулнă ял ячĕсем йышлă. *Элĕк, Ишек, Элмен, Саватер, Ураскилт* (Элĕк р-нĕ), *Ешкилт* (Канаш р-нĕ) — пурте тахçан çын ячĕсем пулнă. Халлĕхе ял ячĕсене чăвашла калакансем пур-ха (çамрăксемпе вăтам çулхисем халĕ чăвашла калаçнă чух *Аликово, Батырево, Марпосад* теççĕ те, ўлĕмрех *Элĕк, Патăръел, Сĕнтĕрвăрри* ятсем калаçура пачах та илтĕнме пăрахас шик те пур), çавăнпа та вĕсем урлă та авалхи çын ячĕсем калаçура епле илтĕннине пĕлме пулать. Тепĕр чух авалхи ят хальхи чăваш ялĕн вырăсла ячĕ урлă та палăрать. Тутар республикинчи Октябрьски районта Лачака ятлă чăваш ялĕ пур, унăн вырăсла ячĕ Абрыскино, вăл вара Упрăç ятран пулнă.

Чăваш хушшинчи хушаматсем те авалхи арçын ячĕсем çинчен чылай каласа пама пултараççĕ. Акă *Сайкин* хушамат *Сайкка* ятпа çыхăннă, *Улаев* хушамат *Улай* ятран пулнă.

Чăн та, авалхи ятсене архиври документсем тăрăх та (чи малтанах кунта перепись материалĕсене шута илес пулать) тĕпчеме пулать. Хăй вăхăтĕнче В. К. Магницкий арçын ячĕсене шăпах документсем тăрăх пухнă, хăйĕн списокне те документсенче çырнă пекех кĕртнĕ. Вырăсла çырнă документсенче тиексем чăваш ячĕсене калаçура илтĕннĕ пек çырайман, чылайăшне вырăсла е тутарла май улăштарнă. Çавăнпа та документра çырни

тăрăх авалхи ят епле илтĕннине нумай чухне пĕлме çук. В. К. Магницкий списокĕнчех акă *Ахтибяк, Аюка, Баген, Байзув, Берзибяк, Дюта, Егон, Качалов, Килдыбяк, Килекитда, Обрис, Огитка* ятсем пур. Вĕсен чăн-чăн сăнсăпачĕ пирки тем тĕрлĕ те шухăшлама пулать. Çавăнпа та авалхи ятсен ĕлкине чи малтан халăх калаçăвĕнчех шырама тивет.

Мăн асаттесен ячĕсене те яланах чăн чăваш ячĕсем теме çук, вĕсем хушшинче тĕрлисем пур. Пĕрисене чăннипех чăваш ячĕсем теме пулать. Формипе вĕсем чĕлхери пайăр мар ят евĕрлĕ *(Уланкă, Ахах)*, е вĕсен тымарĕнче халĕ те ăнланмалла сăмах тăрать *(Илемпи, Кĕмĕлпи)*. Кун пек ятсен хисепĕ йышлăх та мар.

Иккĕмĕшĕсем тытăмĕ тата мĕнле тĕпрен пулни тăрăх ытти тĕрĕк халăхĕсем (тутарсем, пушкăртсем, казахсем т. ыт. те) хушшинче çӳрекен ятсене аса илтереççĕ. Маларах асăннă *Кĕмĕлпипе* пĕрлех хĕрарăмсен авалхи ячĕсем хушшинче *Кĕмĕш* те пур. Ку вара *кĕмĕл* сăмахăн ытти тĕрĕксем хушшинчи ашшĕ. Авалхи арçын ячĕсем хушшинче чăвашсен те *Аксупай, Акташ* ятсем пулнă. Кусем те тĕрĕк сăмахĕсенчен йĕркеленнĕ ятсем, чăваш сăмахĕсенчен йĕркеленес пулсан, вĕсен ĕлки *Шуршывпуян, Шурчул* пулмаллаччĕ.

Виççĕмĕшсене чăвашсем арабпа перс халăхĕсенчен йышăннă. *Анисса* ята халĕ çамрăксем ытларах А. Д. Кăлкан драми тăрăх пĕлеççĕ. Тахçан ку ят чăваша арабсенчен куçнă, араб чĕлхинче вăл малтан «тус, юлташ» пĕлтерĕшлĕ апеллятив пулнă. Сингармонизм законне пăхăнманниех ку ят чăваш чĕлхине ютран куçнине кăтартать. Авал чăваш хушшинче те *Асамат* ят çӳренĕ (Элĕк районĕнче каярахпа вăл ял ячĕ пулса сыхланса юлнă). Ку та арабсенчен килнĕскер, унта тахçан вăл «чап, мухтав» пĕлтерĕшлĕ пайăр мар ят пулнă.

Йышăнакан ятсемпе пĕрле чăваш чĕлхине асăннă чĕлхесенчен ят тăвакан формăсем те кĕнĕ. Акă чăвашсен авалхи ячĕсем хушшинче *Кĕлпану, Кĕлпустан* ятсем тĕл пулаççĕ — иккĕшĕ те хĕрарăм ячĕсем. Иккĕшĕ те вĕсем хутлă ятсем: пĕрремĕш сыпăкĕ *(кĕл)* перс чĕлхинчи гюль «роза чечекĕ» сăмахран, *пану* вара перссен «госпожа» тенине пĕлтернĕ — чăвашлатарах каласан, роза евĕр пике тенине пĕлтерет ĕнтĕ; пустанĕ вара перссен «цветник» пулать — Кĕлпустанĕ «роза чечекĕн пахчи» пулса тухать. *Кĕл-* тымарĕ те, *-пану, -пустан* форманчĕсем те (ят тăвакан аффикс евĕр элементсене çапла

калаççĕ) ытти ятсенче те тĕл пулаççĕ: *Кĕлнисса, Элпану, Шерпустан* т. ыт. те. Ят тымарĕсемпе ят форманчĕсене ирĕккĕн тыткаланă пирки вĕсем пĕр-пĕринпе хутăшса каяççĕ, арабсемпе перссенчен йышăннă тымарсем чăваш форманчĕсемпе çӳреме тытăнаççĕ (*Шерккей,* сăмахран), çавнашкалах чăваш сăмахĕсенчен пулнă тымарсем ютран илнĕ формантсем йышăнма тытăнаççĕ (*Тимĕрхан*). Çавăнпа та нумай чухне ятсене тăваннисемпе ютран илнисем çине пайлама çук. Ютран йышăннă ят та майĕпен тăван чĕлхе кĕввине кĕрсе чăвашланса каять, чăн чăваш ячĕ пулса тăрать. Ят епле пулнине е ăçтан тухнине шыраса çеç тĕпчевçĕсем вĕсен аякри хурăнташĕсене тупма тăрăшаççĕ.

Кунта калани авалхи чăваш ячĕсем хушшинче арабсемпе перссенчен илнисем кăна тĕл пулнине пĕлтермест. Пирĕн мăн асаттесемпе вĕсен аслашшĕсем ытти халăхсемпе те хутшăннă, вĕсен ячĕсене те йышăнма пултарнă. Акă, сăмахран, авалхи арçын ячĕсем хушшинче *Чепи, Чепей, Чепек, Чепик, Чепук* ятсем тĕл пулаççĕ, тымарĕ вĕсен пурин те пĕрешкел. Чăваш чĕлхинче ку тымарпа çыхăнтармалли сăмах çук (*Чапай е Чапук* пулнă пулсан, *чап* сăмахпа çыхăнтарма юратчĕ), апла пулсан, ун тăванне аякра шырама тивет. Авалхи монголсен *Джебе* ят пулнă, вăл «ухă йĕппи» тенине пĕлтернĕ. Чингисхан çарĕнчи пĕр пуçлăх шăпах çав ятлă пулнă. Монгол чĕлхинчи Джебе ят чăваш чĕлхинчи Чепи ятпа фонетика енчен килĕшӳллĕ çыхăнать. Тата тахçан авал чăваш чĕлхине монголсенчен пайăр мар ятсем кĕме пултарнă пулсан, пайăр ятсем кĕнинчен тĕлĕнмелли çук — вĕсем халăхран халăха пайăр маррисенчен тем чул çăмăлрах куçаççĕ.

Авалхи ятсем хушшинче тахçантанпа кӳршĕллĕ мари, мордва, удмурт халăхĕсеннисемпе пĕрешкеллисем те сахал мар. Мари тĕпчевçисем хăйсен авалхи ячĕсен пысăкрах пайĕ тĕрĕксенчен йышăннисем тесе шутлаççĕ[1]. Апла пулин те, чăваша вĕсен ячĕсем те куçма пултарнă.

Çапах та арабсемпе перссенчен йышăннисем чăвашăн авалхи ячĕсем хушшинче ыттисенчен чылай йышлăрах. Çавăнпа вĕсем çинчен уйрăм калаçмасăр май килмест.

---

[1] *Ф. И. Гордеев.* Этимологии марийских антропонимов. Сб. Вопросы марийской ономастики», вып. 2. Йошкар-Ола, 1980.

ТĂВАН ЧĔЛХЕ ТЫМАРĔНЧЕН ТУХНĂ ЯТСЕМ

Ку ятсем шутне чи малтан *Кашкăр, Упа, Чĕкеç, Пăрчкан, Мерчен, Ахах* йышшисем кĕреççĕ. Пулăвĕ енчен пăхас пулсан, кунашкал ятсем чи авалхисем шутланма тивĕç. Пĕр енчен, ку ятсенче сĕм-авалтан пыракан тотемизм йĕрĕсем палăраççĕ. Тотемизм йĕрки тăрăх кашни йăх хăйне пĕр-пĕр чĕрчунран — кашкăртан, тилĕрен, арланран пулса кайнă тесе шутланă, çав чĕрчуна хисепленĕ (каярахпа специалистсем ăна тóтем ят панă). Сĕмавалах тотем шутланакан чĕрчун йăх ячĕ кăна шутланнă пулас, каярахпа йăх ячĕсенчен çын ячĕ пулнă. Тепĕр енчен, кунашкал ятсем пурте пекех сунăмлă ятсем шутланаççĕ. *Упа* ятлă çын çав ятлă чĕрчун пекех вăйлă, нимле хăрушлăхран та хăрами, чир-чĕре парăнми пултăр тенĕ ĕнтĕ. *Мерчен* ят хĕре илем кӳрет, çыншăн кăмăллă тăвать тенĕ пулĕ. Язычество тапхăрĕнче кунашкал ятсем ырăссен те, Европăри ытти халăхсен те пулнă.

Чĕрчун ячĕсене çынна парассинче чăвашсен хăйне евĕр йĕрке пулнă: арçынна чупакан чĕрчун е пулă ячĕсене панă, хĕрарăма — вĕçен кайăк ячĕсене. Килти выльăх (лаша, ĕне, ашак, тĕве, сурăх, така, тиха, путек) е кайăк-кĕшĕк ячĕсене (хур, кăвакал, чăх, автан, чĕпĕ) чăвашсем çынна пани паллă мар. Ытти тĕрĕксен килти выльăх ятĕнчен пулнă çын ячĕсем те тĕл пулаççĕ. Уйрăмах тиха ячĕ килĕшӳллĕ пулнă курăнать. Вăл ятсенчен хăшне-пĕрне тĕрĕксенчен чăвашсем те йышăннă. Акă *Актай* (арçын ячĕ) чăвашла куçарсан «шурă тиха» пулать (тутарла *ак* «шурă», *тай* «тиха»). Тайпи — хĕрарăм ячĕ, ун тымарĕнче те çав сăмахах. Çапах та темле майпа чăвашсен те арçын ячĕсем хушшине *Кăркка* кĕрсе кайнă. (*Пыркин* хушамат çав ятран пырать).

Арçын ячĕсенчен чĕрчун ятлисем çаксем пулнă: *Упа* (варианчĕсем: *Упи, Упаç, Упак, Упук, Упан, Упанкка*), *Кашкăр, Арăслан, Тилĕ* (*Тилли, Тиликкей, Тилек, Тилюк, Тилюç*), *Куян, Сайкка, Пурăш* (*Пуршев* хушамат çак ятран пулнă), *Арлан* (халĕ *Арланов* хушаматра тĕл пулать).

Пулă ятлисем: *Кăртăш*, (варианчĕсем: *Кăрăш, Кăршши, Кĕршши, Кăртиш, Кăртуç, Кăртти; Карташов, Ершов* хушаматсем çак ятран пулнă), *Уланкă* (*Улангин, Окунев* хушаматсем çак ятран), *Кăлчак* («подлещик»), *Сасан* (е *Сасак*), *Кăрăс* («сорожка»), *Кĕрче* («пескарь»),

Кутан («пескарь»; *Куданов* хушамат çак ятран), *Çăрттан, Партас* («голавль»), *Кĕркке* («форель»), *Хăрпан* («лещ»), *Кусар* («чехонь»).

Вырăссем *жерех* текен пулла чăвашсем е *юман пулă,* е *ут пулă* теççĕ. Арçын ячĕ те *Юман* пур. Ку ят вара пулăпа та, йывăçпа та çыхăнма пултарнă (юман пек патвар, çирĕп пултăр тенипе). Йывăçсенчен арçын ячĕсенче *Каврăç, Нарат* (хыр) тĕл пулать, ытти йывăç ятлисене асăрхаман.

Арçын ячĕсем хушшинче чăвашсен çаксем пулнă: *Палантай (Баландаев* хушамат тĕпĕ), *Палаттай, Палатти, Палтай, Палташ, Палти, Палуш, Палюк, Палей (Палейкин* хушамат тĕпĕ), *Палля.* Хут çинче Павел çырăнаканнине те чылай çĕрте *Палюк* е *Палля* тенĕ. Çапах та, пулса кайни енчен пăхсан, *Палля* е *Палюк* ятсем *Павел* ятпа çыхăнмасан та пултарнă: ютран йышăнакан ят вырăнне çавăн евĕрлĕрех илтĕнекен тăван ята калама тăрăшни çинчен маларах асăннăччĕ ĕнтĕ. Маларах асăннă ятсем пурте пĕр тымартан шăтнă теме пулать. Ку тымар малтан е «пăлан», е «палан» пĕлтерĕшлĕ пулма пултарнă.

Пăлан тени чăвашла ытларах «олень» пĕлтерĕшпе мар, «лось» пĕлтерĕшпе çӳренĕ (пăши сăмаха нумай çĕрте чăвашсем халĕ те пĕлмеççĕ). Пăшийĕ вара чăвашсем пурăнакан тăрăхра ĕлĕк йышлă пулнă. Пăши сăмаха пĕлекен çĕрте унран пулнă арçын ячĕ пулнă — *Пăши* е *Măши.* Тепĕр енчен, асăннă ятсен тымарĕнче палан йывăç та пулма пултарнă: паланăн çырли йӳçĕ, ун пек «йӳçĕ» ятлă çынна усал-тĕсел те, чир-чĕр те асăрхаймĕ текен шухăша асра тытма пултарнă. Фонетика енчен *Палантай* вариант палан йывăçпа меллĕрех те çыхăнать: *палан+тай.* Анчах та ытти чух авалхи чăваш ячĕсенче йывăç ячĕсем сайра тĕл пулни иккĕлентерет. Тен, тахçан ун пеккисем ытларах пулнă пулĕ — пирĕн вăхăта пурте çитеймен пуль. Вырăссен авă *Вĕрене, Хурăн, Ăвăс, Хыр, Хурама* евĕр ятсем тахçан яланхи ятсем шутланнă[1]. Халлĕхе Палантай ята «пăлан» сăмахпа çыхăнтарни вырăнлăрах пек туйăнать: *Пăлантай* ытти чĕрчун ячĕсемпе пĕр ушкăна лекет. Пуласса *Палантай* ячĕ регрессивлă ассимиляци йĕркипе *Пăлантай* формăран çăмăллăнах пулма пултарнă. *Палантай* формăран *Палат-*

---

[1] *А. В. Суперанская, А. В. Суслова.* Современные русские фамилии. М., Наука», 1981, стр. 25.

тай пулать (юлашки «ай» сыпăкне чĕнӳ аффиксĕ пек ăнланнипе ун умĕнхи *т* сасă тымара куçать, тымар вара *палан*-вырăнне *палат*-пулса тăрать; кунашкал япала ятсенче тăтăш тĕл пулать), *Палаттайран — Палатти*. Ят тымарĕ кĕскелнипе *Палтай, Палташ, Палти* вариантсем çуралаççĕ. *Палтай, Палташ* вариантсенче чĕлхе туйăмĕ вĕçĕнчи *-тай, -таш* сыпăксене ят тăвакан аффикс вырăнне йышăнма тытăнать — ят тымарĕ вара каллех *пал* — таран кĕскелет. Ку тымартан вара *Палуш, Палюк, Палля* вариантсем тухаççĕ. Асăннă вариантсен пулăмне кĕскен çапла кăтартма пулать: Пăлантай>Палантай>Палаттай>Палатт+и, Пал+тай, Пал+таш, Пал+юк, Палля.

Курăк е пахчаçимĕç ячĕсенчен пулнă арçын ячĕсем чăвашсен тĕл пулмаççĕ. Вырăссен вара авал кун евĕр ятсем хăнăхнисем шутланнă. Сăмахран, 16-мĕш ĕмĕрте Новгород хулинче Семичев хушаматлă мещенĕн пĕр ывăлĕ Купăста, иккĕмĕшĕ Кăшман (Редька), виççĕмĕшĕ Пăрça (Горох) ятлă пулнă. Сăмах май, вырăс документсенче Блоха ят та тĕл пулать. Çав хулари документсенчех Вязель («тăрна пăрçи»), Осока (Хăях), Отава (Каю), Пырей («ӳхлĕм», «шурути») ятсем те пур[1].

Хĕрарăмсене авалхи чăвашсем вĕçен кайăк ячĕсене панă: *Тăри, Пăрчкан, Хĕрхи* (вырăсла сыч е кобчик), *Путене, Текерлĕк, Чĕкеç, Чана, Çерçи, Шăпчăк, Куккук, Кăвакарчăн, Кульки, Кулюк, Кулюка* т. ыт. те. Пурте вĕсем çыншăн кăмăллă шутланнă пулас. Кăмăлламан кайăк ячĕсене çынна паман (тăмана, çăхан). Çав вăхăтрах, вăйлă, шиксĕр кайăк ячĕсене арçынна панă: *Кăйкăр, Пĕрхĕт, Хурчка, Ăмăрт* (юрăра: Ăмăрт вĕçрĕ çӳлелле, тĕкĕ ӳкрĕ çĕрелле). Элĕк районĕнче *Куракăш* ятлă ял пур, вăл та тахçан çын ячĕ пулнă. Анчах та ăна чăвашсем ытти тĕрĕксенчен йышăннă — унта вăл Каракош пулнă (чăвашла Хура кайăк пулать). Каракош текен пĕрхĕтпе казахсемпе кăркăссем халĕ те сунара çӳреççĕ. *Пăчăр, Карăк* (глухарь) — каллех ытларах арçын ячĕсем пек çӳренĕ (тен сунар кайăкĕсем пулнăран пуль).

Шăнкăрч та хĕрарăм ячĕсенче тĕл пулмасть, темле сăлтава пула вăл арçын ячĕ пулса тăнă. Çапах та арçынна Шăнкăрч ят хурасси каярах тухнă йăла пулас. Арабсемпе перссенчен йышăнакан ятсем сарăлса пынăçемĕн чăвашсем хăйсен авалхи кайăк ячĕсене пăрахăç-

[1] *А. В. Суперанская, А. В. Суслова.* Асăннă кĕнеке, 23—24 стр.

лама тытăннă. Çемьере ача тĕрлĕ чир-чĕре пула пурăнаймасан, каллех авалхи ятсене аса илнĕ, вĕсенче сых вăйĕ ытларах тесе шутланă курăнать. Арçыншăн Шăнкăрчă шăпах сых ят пулса тăнă. Пĕр 20—25 çул каярах тĕллĕн-тĕллĕн *Шăнкăрчă* сых ят вырăнĕнче тĕл пулкалатчĕ-ха. Çынни хут çинче Иван, Петĕр е Анатолий çырăнатчĕ, ялта вара пурте хăйне Шăнкăрч тесе чĕнетчĕç. Çĕр çул каярах Шăнкăрчсем ялта икшер-виçшер те пулнă, çавăнпа Скворцов хушамат чăвашра тăтăш шутланать.

Курак ята ытларах хĕре панă. Анчах та арçын та *Курак* ятлă пулма пултарнă пулас. Ашмарин словарĕнче *Куракка, Куракки* ятсем пур, вĕсем те куракпах çыхăннă курăнать (ывăл хура çӳçлĕ çуралнине кура пама пултарнă; чăн та, ятăн этимологийĕ урăхла та пулма пултарать). Тури чăвашсем хушшинче *Кураккасси* ятлă ялсем тĕл пулаççĕ. Ял ятне арçын ячĕпе кăна панине шута илсен, ку ял ячĕсем те *Курак* арçын ячĕ пек çӳренине çирĕплетеççĕ.

Арçын ячĕсем хушшинче *Кайăк (Кайкки)* тĕл пулать. Анчах та ку ятăн апеллятивĕ «вĕçен кайăк» мар, «чупан кайăк» (зверь) пулнă пулас, «вĕçен кайăк» пĕлтерĕшлĕ пулнă пулсан, вăл хĕрарăм ячĕ пулмаллаччĕ.

Ёлĕк чăвашсем кайăк ячĕсене хăйсемшĕн арабсемпе перссенчен йышăнакан ятсенчен çывăхрах шутлани çакăнтан та курăнать. 1979 çулта авалхи чăваш ячĕсене тĕпчес тĕллевпе пире студентсемпе Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районне кĕрекен Чăвашкасси Улхаш ялĕнче пулма тӳр килчĕ. Унта пĕр Арихве ятлă ватă хĕрарăм хăй ячĕ пирки çапла каласа пачĕ: «Сана *Тăри* е *Путене* ятлă хумаллаччĕ,— тетчĕ мана асатте,— ятна тĕрĕс мар хутăмăр».

Хĕрарăмсен авалхи ячĕсем хушшинче, кайăк ячĕсемсĕр пуçне, *Ахах, Мерчен* (варианчĕсем *Мерчи, Мерчук, Мерккуç), Кĕмĕл, Ылтăнпи, Нухрат, Ука, (Уки, Укăç, Укаш), Тевет (Теветти, Теветпи)* йышши «хаклă» ятсем пур. Кусем те сунăмлă ятсем: ӳссе çитсен, ят хуçи илемлĕ те хаклă хĕр пуласса шаннă (качча панă чух хĕршĕн хулăм илесси тухăçри халăхсен авалтан пыракан йĕрке пулнă).

Хĕр илемлĕ пултăр тесе панă сунăмлă ятсем те сахал мар: *Илемпи, Чиперпи, Чиперук, Чиперкке, Сарпике, Сарпи, Пике, Пикеç, Пикепи.* Хăш-хăш ята суйланă чух кăмăлпа сăпайлăха тĕпе хунă — *Ырпи, Салампи.* Çе-

мьере хĕр çураласса кĕтнĕ пулсан, ăна *Парне (Парнепи, Парнеç, Парнеслу)* тенĕ. *Сав-* тымарпа («юрат, кăмăлла, килĕштер») пĕлтерĕшпе çыхăннă хĕрарăм ячĕсенчен çаксене асăнма юрать: *Савни, Савнепи, Савнеслу, Савнечей, Савнеш, Савнюкка.*

Тăван чĕлхе тымарĕсенчен тухнă ятсем хушшинче пĕр-пĕр тулашри паллă тăрăх панисем чылай: *Кăтри, Кăтраç* — арçын ячĕсем, *Кăтрапи* — хĕрарăм ячĕ (кăтра пулнăран); *Яка (Якуш, Якав, Яки, Яките, Якунь, Якунькка)* — арçын ячĕ, çÿçсĕр çуралнăран; *Тĕкли* — арçын ячĕ, çÿçлĕ çуралнăран; *Сарри, Хури* — арçын ячĕсем, сарă е хура çÿçлĕ пулнăран; *Улай, Улакка, Улашка, Улаш, Уламас* — арçын ячĕсем, уларах ÿтлĕ пулнăран; *Ярук* — арçын ячĕ, тăсланкăрах çуралнăран («яру» сăмахран); *Сакăльти* — арçын ячĕ, уларах ÿтлĕ пулнăран («сакăль» сăмахран), *Начка* — арçын ячĕ, мăнтăркка çуралнăран т. ыт. те.

Ытти тĕрĕксем пекех, чăвашсем те ывăл ачана «тимĕр» е çавăн йышши «çирĕп» ятсем панă: *Тимĕр (Тимĕркке, Тимĕрук, Тимрук, Тимруç), Пăлат* («булат»), *Туйăн* («желтая медь»), *Алмас* («Алмаз»). Пуçлăха тухма сунса, *Мăрса (Мăрсук, Мăрсукка, Мăрсаккай), Турхан, Алманчă* (хырçă пухакан), *Çĕрпÿ, Вунпÿ* (Вонпукасси текен ял ячĕ çак ятран) тенĕ. Телей сунса, ывăла *Ăрси, Ăрсай* ят хунă (ăрăс «счастье» сăмахран). Виктор Рзай чăваш писателĕн хушамачĕ çак ятран пулнă. Патвар та хăюллă ÿсме сунса, *Паттăр, Матур (Матуркка)* тенĕ, пуянлăх сунса *Пуян (Пуянкка, Пуянтай)* тенĕ. *Пахматти* арçын ячĕ те сунăмлă ятах: пахмат сăмах ĕлĕк «ăстăн, ăспуç» пĕлтерĕшпе çÿренĕ. *Пурай* — арçын ячĕ, пур пултăр, вăрăм ĕмĕрлĕ пултăр пĕлтерĕшлĕ *Тулай* — арçын ячĕ, тулса тĕреклентĕр пĕлтерĕшлĕ. *Тусай* — арçын ячĕ, çынна тус пултăр пĕлтерĕшлĕ.

Маçи, Маçик (Мазиков хушамат тымарĕ), *Маçак (Мазяков* хушамат тымарĕ), *Маçан* арçын ячĕсене те вăрăм ĕмĕр сунса хунă: маçак пуличчен пурăнтăр тенĕ (тури чăвашсен маçакĕ асатте тенине пĕлтерет). *Ÿтемĕш* (е *Йÿтемĕш)* ята та çакăнтах кĕртес пулать: йÿтиччен пурăнтăр тенине пĕлтернĕ ку ят. *Ÿси, Ÿсек, Каччи* ятсем те çавнашкалрах пĕлтерĕшлĕ: ÿстĕр, каччă пултăр.

Арçын ячĕсем хушшинче халăх ятне тĕпе хурса панисем те пур: *Пăшкăрт* (е *Пушкăрт), Калмăк, Мишер, Нухай, Вырăс (Вырăстай), Мучар* (ку сăмах «мадьяр» сăмахпа пĕр тымарлă, венгрсем хăйсене мадьяр теççĕ,

авал венгрсен аслашшĕсем чăвашсемпе кӳршĕллĕ пурăннă).

Тепĕр чух тата ят шыраса ытла чăрмансах та кайман, ывăл çуралнине палăртса, ăна *Ача, Ачак* (*Ачак* ялĕ те çын ятĕнчен пулнă), *Ачук, Сапака* тенĕ (сапака — хăшпĕр çĕрте пĕчĕк арçын ачан ар палли). Çемьере ача ытларах кирлине палăртса, çуралнă ывăла *Сахал* ят панă. Урăх ача-пăча кирлĕ пулмасан, ывăла *Йӳнеç* е *Шураç* тенĕ (тури чăвашсем *çураç* вырăнне *шураç* теççĕ, *Шураç* ял ячĕ çын ятĕнчен). Амăшĕ çие юлнине асăрхайманнипе çуралнă ывăла *Туйман* тенĕ (туй, у. к. «асăрха, сис» пĕлтерĕшлĕ глаголтан).

Авалхи чăвашсен хăш вăхăтра çуралнине пăхса паналли ятсем те пулнă: *Эрнепи* (хĕр ячĕ), *Эрнук* (арç. ячĕ) — эрнекун çуралсан, *Ытлапи* (хĕр ячĕ) — ытларикун çуралсан, *Тунепи* (хĕр ячĕ), *Тунюк* (арç. ячĕ) — тунтикун çуралсан, *Туйпике, Туймăрса* — туй вăхăтĕнче çуралсан; *Хăнапике, Кунакпике, Кунакпай* — хăнара е хăна пур чух çуралсан, *Ялак* (арç. ячĕ) ют ялта хăнарамĕнре çуралсан, *Калăмпи* — калăмра çуралсан.

Чир-чĕре, усал-тĕселе сирес тĕллевпе ача-пăчана юриех илемсĕр ят панă, *Усалук* — арç. ячĕ, «усал» сăмахран, *Яман* — арç. ячĕ, тутарла *яман* — усал, *Патак, Пукан, Çӳппи, Ителмес* (тутартан йышăннă, «йытă та илмест» тенине пĕлтерет), *Улмес* (тутартан йышăннă, «вилмест» тенине пĕлтерет) т. ыт. те. Тутартан йышăннă *яман* сăмахпа çыхăннă ятсем татах та пур: *Ямай, Яманак, Ямантай, Ямансар, Яманчура, Ямук, Ямукка, Ямути. Ями* — хĕрарăм ячĕ, вăл та çак тымартанах тухнă пулас.

Тăван чĕлхе тымарĕнчен тухнă ятсем хушшинче хутлисем те сахал мар. Тытăмĕпе те, ята кĕрекен тымарсен пĕрешкеллĕхĕпе те вĕсем нумай чухне тăванла тĕрĕк чĕлхисенчи ятсене аса илтереççĕ. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, ытти чĕлхесенче хутлă ятсем хутсăррисенчен каярах пулса каяççĕ; хутсăррисем халăхра çуралнă пулсан, хутлисем вара чи малтан пуç пулса тăракан ушкăнсенче çуралаççĕ, каярахпа халăх хушшине сарăлаççĕ[1].

Ку йĕрке чăвашсен те çавнашкалах пулнă темелле. Чăвашсен те, ытти тĕрĕксенни пекех, хутлă ятсем чĕлхере вăй илесси ытларах ют чĕлхесен витĕмĕнчен килнĕ

[1] *С. Распонд.* Структура и классификация древневосточнославянских антропонимов (имена). ВЯ, 1965, стр. 3, 21.

пулас — маларахри тапхӑрсенчи авалхи иран, каярахпа перссемпе араб чӗлхисенчен. Ят тумалли сӑмахсене те чылайӑшне чӑвашсем арабсемпе перссенчен йышӑннӑ (вӗсем ҫинчен каярах калаҫӑпӑр). Ҫапах та тӑван сӑмах пӗрлешӗвӗсенчен пулнӑ хутлӑ ятсем те ҫук мар. Акӑ арҫын ячӗсенче «тӑван», «тимӗр», «пӑлат» «мӑрса», «чура» тӗпсем тӑтӑш тӗл пулаҫҫӗ: *Сартӑван, Алтӑван, Ахтимӗр, Тутимӗр, Сарпӑлат, Уйпӑлат, Туймӑрса, Калмӑрса, Пимӑрса, Яманчура, Карачура* — юлашки икӗ ятӗнчи «яман» «кара» тымарӗсене чӑвашсем тутартан илнӗ, «чура» тымарӗ чӑвашсен хӑйсен те пулнӑ, анчах та пӗлтерӗшӗ унӑн хальхинчен урӑхларах та пулма пултарнӑ («ҫар ҫынни», «пӑхӑнакан ҫын», «ҫамрӑк ҫын»). Апла пулсан, Чуракасси ял ячӗ те *чура* апеллятивпа мар, *Чура* ятпа ҫыхӑннӑ. *Чурачӑк* ял ятӗнче те ҫав тымарах, ку та ӗлӗк ҫын ячӗ пулнӑ. Анчах *Чурачӑк* — хутлӑ ят, кунти юлашки *-чӑк* сыпӑк та тахҫан уйрӑм сӑмах пулнӑ, пӗлтерӗшӗ те унӑн *чура* сӑмахӑнни евӗрех пулнӑ. Пирӗн чӗлхере *чакӑ* пайӑр ятсенче кӑна юлнӑ: *Нарат Чакки, Анат Чакӑ, Кивӗ Чакӑ, Ҫӗнӗ Чакӑ* — ял ячӗсем, Чакка — ҫын ячӗ[1].

Хӗрарӑм ячӗсем хушшинче те хутлисем сахал мар. Вӗсенчи тымарсенчен хӑшне-пӗрне маларах асӑнтӑмӑр, форманчӗсенчен чи паллӑраххисем вара *-пи* (<*пике*) тата *-слу* (сӑлу «чипер» сӑмахран): *Эрнепи, Эрнеслу, Пинепи, Пинеслу* т. ыт. те.

Арҫын ячӗсем хушшинче *иш* тымартан пулнисем йышлӑ: *Ишей, Ишек, Ишенек, Ишетер, Ишук, Ишут, Ишутка, Ишмет, Ишмулла, Ишмӑрса, Ишпар, Ишпаттӑр, Ишпӑлат, Ишӗм, Иштек, Иштерек, Иштукан, Иштул, Ишшук* т. ыт. те. Ку тымар сӑмах тӗрӗк чӗлхисенче пуринче пекех пур, «тус», «ушкӑн», «йыш» пӗлтерӗшсемпе ҫӳрет. Чӑваш чӗлхинче унӑн ӗлки улшӑннӑ та *иш*-ран *йыш* пулнӑ. Ятсенче вара авалхи *иш* пирӗн те ҫав халлӗнех юлнӑ.

Авалхи *мин-* тымартан чӑвашсем арҫын ячӗсем те, хӗрарӑм ячӗсем те тунӑ: Арҫын ячӗсем: *Мини, Миней, Минелӗпай, Минук, Миник, Минулла, Минкке, Минлеккей, Минеккей, Минтук, Минюк, Минюхха, Минька, Миннюпай.* Хӗрарӑм ячӗсем: *Минпикке, Миневер, Минепи, Минеслу, Минеҫ, Минеҫпи, Минисса, Миниҫа, Минъя-*

[1] *М. И. Скворцов.* Древние титулы в чувашской ономастике. Сб. «Диалекты и топонимия Поволжья», вып. 3. Чебоксары, 1975, стр. 73.

мал, Минке, Минкка, Минкке, Минекки, Минюпике, Минсук, Минюкка, Минюç, Минюçça т. ыт. те. Ытти тӗрӗк чӗлхисенче *мин*-тымар ят *турпалли* «родимое пятно» тенине пӗлтерет. Тухăçри халăхсем ӗненнӗ тăрăх, турпалли çынна телей кӳрет, куç ӳкесрен те хăтарать (ахальтен мар Индири хӗрарăмсем çамкисем çине турпалли сăрласа хураççӗ). Çавăнпах пулас, чăвашсем турпалли пӗлтерӗшлӗ *мин* сăмаха ята кӗртме тăрăшнă. Анчах та тем сăлтава пула *мин* сăмахăн авалхи пӗлтерӗшӗ пирӗн чӗлхере çухалнă.

Хӗрарăм ячӗсен пӗр ушкăнӗнче *кӗн-* тымар уйăрма пулать: *Кӗневер, Кӗншей, Кӗнепи, Кӗнерпи, Кӗнеслу, Кӗнечей, Кӗнӳç, Кӗнтепи.* Ку тымар авал «хӗвел» пӗлтерӗшлӗ пулнă, ăна хамăр чӗлхери *кăнтăр, кăнтăрла* сăмахсенче халӗ те йӗрлесе тупма пулать (*кăн-тăр,* у. к. хӗвел тăрри «солнце в зените»), *кун кур, кун кăтарт* пӗрлешӳсенче те сисӗнет ку пӗлтерӗш. Каярахпа *кӗн*-тымар ят пирӗн чӗлхере пӗлтерӗшне те, ӗлкине те улăштарнă (*кӗн*-рен *кун* пулнă). Ятсенче вара унăн авалхи кӳлепи халиччене упранать. Хӗрарăм ячӗсене е кун çутипе çуралнăран, е илем суннипе (Хӗвелпи тенӗ чухнехи пек) хӗвелпе çыхăнтарма пултарнă. Тепӗр чух ку тымар арçын ятӗнче те курăнкалать: *Кӗнешер.*

ТӖРӖК ХАЛĂХӖСЕННИПЕ ПӖРЕШКЕЛ ЯТСЕМ

Тытăмӗ енӗпе те, ӗлкипе те авалхи чăваш ячӗсем нумайăшӗ ытти тӗрӗк халăхӗсен ячӗсемпе пӗре килеççӗ. Ун пек ятсен пулăвне хамăр чӗлхери сăмахсем урлă ăнлантарма çук, тӗрӗк сăмахӗсем урлă ăнлантарма май килет. Кун евӗр ятсем тутар ячӗсемпе кăна çывăх пулнă пулсан, чăвашсем вӗсене хăй вăхăтӗнче кӳршӗллӗ тутарсенчен кăна йышăннă теме пулатчӗ. Ун пек калама сăлтавӗ те çук мар: чăвашсем темиçе ӗмӗр тутарсемпе кӳршӗллӗ пурăннă çеç мар, çӗр çул ытларах Хусан ханствинче тутарсене пăхăнса тăнă (15-мӗш ӗмӗртен пуçласа 16-мӗш ӗмӗрӗн варринче Вырăс çӗршывӗпе пӗрлешиччен). Паллах, вăл тапхăрта чăваш хушшинче тутар ячӗсене сарăлма кирлӗ условисем пулман мар, ислам тӗнне йышăнса вуçех тутара тухнă чăвашсем те йышлă пулнă вăл вăхăтра.

Анчах та ку ятсенчен чылайăшӗ ытти тӗрӗксенни

евӗр пулнине асăрхама пулать. Акă пирӗн авалхи *Çанат* ят (ăна Илпек Микулайӗ «Хура çăкăр» романӗнче асăнать: «Қас хуралçи хăрах алăллă Çанат...») казахсен Жанат ячӗпе пӗр килет, казахла вара ку ят «ырлăх» е «чи илемли, маттурри» тенине пӗлтерет[1]. Хамăрăн авалхи *Пурай* ята та Бурай текен казах ячӗпе танлаштарма май пур (маларах ăна *пур* сăмахпа çыхăнтарса ăнлантарнăччӗ). Қазахсем *Бурай* ят *бура* «тӗве» апеллятивран пулнă тесе шутлаççӗ. Авалхи чăваш ячӗсем хушшинче *Апу* ят пулнă (вăл ят хушаматра сыхланса юлнă, Абу хушаматлă çын 20-мӗш çулсенче Қанашри педтехникумăн малтанхи директорӗсенчен пӗри пулнă). Қазах чӗлхинче *Абу* ят *абу* «атте» пайăр мар ятран пулнă теççӗ[2]. *Атай* чăваш ятне казахсен *Адай* тӳр килет, казах тӗпчевçисем ăна хăйсен чӗлхинчи «кайăк чӗппи» пӗлтерӗшлӗ апеллятивпа çыхăнтараççӗ[3].

Айтай ята авал чăвашсем арçынна çеç панă. Çавăн евӗр *Айдай* ят казахсен арçын ячӗ те, хӗрарăм ячӗ те шутланать. Қазахла ку ят «уйăх евӗр» тенине пӗлтерет[4]. Чăвашра *Айтайран* çӗнӗ ят çуралнă — *Айтак* (юлашки *-ай* сыпăка чӗнӳ аффиксӗ вырăнне хурса, ун умӗнчи *айт-* пайне ят тымарӗ тесе ăнланнă; ун çумне вара тепӗр *-ак* аффикс хушнă та — çӗнӗ ят пулса тăнă *(Айтак)*, танл.: шыв — шыв+ак, пыл — пыл+ак; *мăнаçи* (диал., «асатте»)>*маçи*>*маçак; мăнами*> *мами*>*мамак*. Халӗ Айтак ят хушаматра тӗл пулать (Етӗрне районӗнчи «Ленинская искра» колхоз председателӗ çав хушаматлă).

Мамай ят тӗрӗк халăхӗсем хушшинче анлă сарăлнă ят шутланнă. Вăл ят чăваш хушшинче те çӳренӗ. Чăвашсен *Мамунӗ* те (арçын ячӗ) çав тымартанах тухнă пулас.

Авалхи арçын ячӗсем хушшинче чăвашсен *Ермек* пур. Қу ят та ытларах казахсен тӗл пулать (вӗсен паллă юрăçине Ермек Серкебаевах аса илер). Қазах тӗпчевçисем ăна хăйсен чӗлхинчи «йăпану» пӗлтерӗшлӗ апеллятивпа çыхăнтараççӗ. Чăваш хушшинче *Ярмак* ят та пулнă, анчах та ку вара вырăссен *Ермакӗнчен* тунăскер. Вырăсла *Ермак, Ермол (Ермолов* хушамат çак ятран) — *Ермолай* ятăн калаçури формисем.

---

[1] *Т. Жанузаков.* Тайны имен. Алма-Ата, 1974, стр. 58.

[2] *Апу* ят казахпа чăваш чӗлхине арабсенчен те куçма пултарнă. Арабла *абу* «атте» (А. Гафуров. Лев и Кипарис. М., 1971, стр 30.

[3] *Т. Жанузаков.* Асăннă ӗç, 12 стр.

[4] *Т. Жанузаков.* Асăннă ӗç, 13 стр.

Ят пĕлтерĕшĕ çинчен калаçнă чухне авалхи *Исемпи* (хĕр ячĕ), *Исентей, Ишентей* ятсене асăннăччĕ ĕнтĕ. Вĕсем ытти тĕрĕк чĕлхисенче халичченех хăй пĕлтерĕшне упраса хăварнă *исен* «сывă», «таса» пĕлтерĕшлĕ апеллятивран пулнине те кăтартнăччĕ. Ку тымарпа çыхăннă арçын ячĕсем пирĕн татах та тĕл пулнă: *Иссен, Иссей, Исенне, Исенпай, Исси, Исен, Исенек, Исенмăрса, Исенкке, Исентерек, Ишенек, Исампай* (регрессивлă ассимиляци йĕркипе). Хĕрарăм ячĕн *Иçенпи* вариант пур. Казах чĕлхинчи *Есен* ят та çак тымартанах.

Авалхи арçын ячĕсем хушшинче чăвашсен *Теней, Тени* (Элĕк районĕнчи Тени ялĕсем çак ятран юлнă), *Тенеккей, Тенек* ятсем пулнă. *Теней* ят пушкăртсен те пур, ăна пушкăрт тĕпчевçисем *теней* «ача» апеллятивран пулнă теççĕ[1] (чăвашсен те *ача* пайăр мар ятран тухнă *Ачак, Ачук* ятсем пулни çинчен маларах асăннăччĕ). *Теней, Тени* чăваш ячĕсемпе *Теней* пушкăрт ячĕн тымарĕ пĕрешкел пулма тивĕç. Чăн та, ку ятсен пулăвне урăхларах ăнлантарма та пулать: пурте вĕсем авалхи *тĕн* «çĕрле» апеллятивран пулма пултарнă, çĕрле çуралнă ачана çавнашкал ят хунă теме пулать. *Тĕн* тымарĕ асăннă пĕлтерĕшпе чăваш чĕлхинче юлман, пушкăрт чĕлхинче юлнă.

Çакăн евĕр тĕслĕхсем (вĕсене татах та илсе кăтартма пулĕччĕ) тĕрĕксенни евĕр ятсенчен чылайăшĕ халăхра авалтан упраннине кăтартаççĕ пулас. Пурнăç условийĕсемпе йăла-йĕркесем нумай енĕпе пĕрешкел пулнине кура ĕлĕк чăвашсем хăйсене ытти тĕрĕксемпе çывăхрах хунă, çавăнпа тĕрĕксен ячĕсем те чăвашсене тăванрах туйăннă курăнáть. Çынна мĕне пăхса ят хурасси те авал чăвашсен ытти тĕрĕксенни евĕрлех пулнă. Каярахпа кăна, ытти тĕрĕксем хушшинче ислам тĕнĕ вăй илсе пынăçемĕн, чăвашсемпе тĕрĕксен йăли-йĕркисем пĕр-пĕринчен уйрăмланса кайнă. Çĕнĕ тĕнпе пĕрле тĕрĕксем хушшине араб ячĕсем йышлăн сарăлнă, çав вăхăтрах вĕсем хăйсен унччехи ячĕсене те пăрахăçламан.

Ытти тĕрĕк халăхĕсенни пек ятсем пурте авалхи тапхăртан юлнă теме çук, паллах. Чылай ятсене чăвашсем каярахпа кÿршĕллĕ тутарсемпе пушкăртсенчен йышăнма пултарнă. Кусен шутне, сăмахран, *Яман, Яманак (Яман+ак), Ялампи* (ку хĕрарăм ячĕ) ятсене кĕртме

---

[1] *Т. Х. Кусимова.* Древнебашкирские антропонимы. АКД, Уфа, 1975, стр. 23.

пулать: *ялан* — «хир» пĕлтерĕшлĕ тутар сăмахĕ, хирте ĕç вăхăтĕнче çуралакан хĕре çавнашкал ят панă. *Карапай, Карапаш, Алтынпаш, Карачура, Акчура* ятсене те тутартан йышăннă, вĕсен чăвашла аташĕсем *Хурапуян, Хурапуç, Ылтăнпуç, Хурачура, Шурчура* пулмаллаччĕ. Чăваш хушшинче *Абашев* хушамат тĕл пулать, вăл *Апаш* ятран пулнă. Ячĕ вара е *Алапаш* (ула пуç) е *Айпаш* (уйăх пуç) ятсенчен кĕскелнĕ. Тутарсен икĕ ячĕ те пур. *Тухтар* ят та тутартан кĕме тивĕçлĕ (чăн та, ку ят ытти тĕрĕксен те пур), унăн чăвашла аташĕсем — *Тăхтаман (тăхта* ґлаголтан) е Тăхти.

Пăлхар тапхăрĕнче (X—XIII ĕмĕрсенче) е каярахпа Хусан ханствине пăхăнса пурăннă чух чăвашсем тутарла (у. к. кипчакла) пурте тенĕ пекех ăнланнă пулмалла. Каярахпа вара тутарсенчен аякра пурăнакан тури чăвашсем тутарла калаçми пулнă, çавна май тутарсенчен йышăнакан ятсене те ытларах чăвашлатнă. Акă тутарсене çывăхрах пурăнакан чăвашсен *Пай* (чăвашла *Пуян), Пайкилт* (чăвашла Пуян килчĕ) ятсем юлашки вăхăтченех сыхланса юлнă. Тури чăвашсен вара вĕсем вырăнне *Пуян, Пуянтай* ятсем çӳреме тытăннă. Анатри чăвашсем хушшинче *Атнепи* (хĕрарăм ячĕ), *Атнеккей, Этнеккей, Атнюхха* (арçын ячĕсем) ятсем çӳренĕ. Турисен вĕсем вырăнне *Эрнепи, Эрнюк, Эрнуç, Эрнеккей* ятсем пулнă. «Эрне» тата «атна» сăмахсем пĕр пĕлтерĕшлĕ пулнине чухлакан анатри чăвашсем ытларах тутар чĕлхи енне туртăннă, тутар сăмахĕнчен пулнă ятсене килĕштеререх панă. Турисем вара *Атнепи, Атнеккей* ятсемпе е пачах та усă курман, е вĕсен *Атнепи, Атнеккей* тата *Эрнепи, Эрнеккей* расна ятсем пулса тăнă. Тутарла пĕлмен пирки вĕсен калаçăвĕнче *Атнепипе Эрнепи* хушшинче çыхăну çухалнă.

Минтупай ят тури чăвашсен те пур (Миндубаев хушамат вĕсем хушшинче те тĕл пулать), анчах та вĕсем ку ят мĕне пĕлтернине пачах та пĕлмеççĕ. Анатрисем вара ăна халĕ те тутарла *мин де бай* «эпĕ те пуян» тесе ăнлантараççĕ. Çавнашкалах *Янкилт* (Çĕнни килчĕ), *Янкул* (Çĕнчура), *Янтукан* (Çĕнĕ тăван), *Янпай* (Çĕнĕ пуян), *Янтай, Янтуш* (Çĕнĕ тиха) ятсен тутарла пĕлмен çыншăн пĕлтерĕшĕсем çухалнă, пĕлекеннисемшĕн вĕсен пĕлтерĕшĕ уçăмлă. Ячĕсем вара кусем анатрисен те, турисен те пулнă. Элĕк районĕнче *Янкурас* ятлă ял пур. Ку та тахçан тутартан йышăннă çын ячĕ пулма кирлĕ: тут. *ян* «çĕнĕ»+кордаш «пĕр ӳсĕмри çын» (вырăсла

«сверстник»), пĕлтерĕшĕ çухалнă пирки *курташ* чăвашла *курас* пулса тăнă.

Тепĕр чух чăвашсен тĕрĕксенни евĕр ячĕсем хăйсен тымарĕсемпе монгол чĕлхисем еннелле туртăнаççĕ. Акă *Сарман* (Сармантей) чăвашсен те, тутарсен те пур, çапах та ăна чăваш чĕлхи урлă та, тутар чĕлхи урлă та ăнлантарма май килмест. Апла пулсан, чăвашсем те, тутарсем те ăна пĕрешкелех ютран йышăннă: е иран йăхĕсенчен (скифсен *сар* «лайăх», *ман* «çын» тенине пĕлтернĕ, *Сарман* — лайăх çын), е монголсенчен (монгол чĕлхинче сарман «уйăх» тенине пĕлтерет). *Сатай* чăваш ячĕ казахсен *Саттайне* аса илтерет. Чăвашпа казах чĕлхисенче ун тымарĕ тупăнмасть, çавна май казах тĕпчевçисем ăна монгол чĕлхинчен кĕнĕ тесе шутлаççĕ (монголла *Сатай* — савнă çын, çывăх çын, тенине пĕлтерет)[1].

Çапах та тĕрĕксенни евĕр чăваш ячĕсенче авалтан упранаканнисен е тымарĕпе аваллăха туртăнаканнисен хисепĕ йышлăрах пек туйăнать. Тĕслĕхшĕн çак ушкăнсенех илсе пăхар:

Арçын ячĕсем:	Хĕрарăм ячĕсем:
Элек	Элине
Элекки, Элеккей	Эльпану
Элекка, Элекке	Элпике
Элекки, Элеккен	Элтюк
Элеç, Элеçук	Элтюç
Элеш	Элтюкка
Эливан, Элихван	Илечей
Элюç, Элке	Илпике
Элле, Элли	Илпинас
Элĕк	Илсĕвер
Элмен, Элменей	Илтевер
Элментей	Илтен
Элмăрса	Илтепи
Элтирек	Илпук
Илай, Илей	Илкка
Илемен	т. ыт. те
Илен, Иленюк	
Илехмет	
Илет	
Иливан, Илихван	
Илмемет	
Илмен, Илментей	
Илмет т. ыт. те	

[1] *Т. Жанузаков.* Асăннă кĕнеке, 107 стр.

Тĕрлĕрен илтĕнеççĕ ку ятсем, вĕсен ĕлки те (формн) расна, анчах та тымарĕ вĕсен пĕрре — авалхи *эл (ил) апеллятив. Чăваш чĕлхинче ку тымартан ял сăмах аталаннă. *Ял* тымартан аталаннă ятсем чăвашăн йышлă мар (*Ялак, Ялук, Ялмăрса, Ялпай, Ялтирек* — пурте арçын ячĕсем), **эл (ил)* тымартан тухнисем вара—вĕçĕмсĕр. Пĕр чухне авалхи тымар çумне аффикссем хушăннă (*Эл+ек, Эл+ек+ка, Эл+ĕç, Эл+еç+ук, Эл+ +еш, Эл+ĕк*), тепĕр чух тымар е иккĕмĕшле ят çумне чĕнӳ аффиксĕ хушса çĕнĕ ят тунă (*Элекки, Элеккей, Илей*), виççĕмĕшĕнче вара авалхи тымар тепĕр тымарпа пĕрлешнĕ хутлă ят пулса тăнă (*Эли+ван, Эл+ +мен, Ил+мăрса, Ил+тукан, Эл+пану, Ил+пике> Илпи* е *Элпи*). Ят тăвакан форманчĕсем вара тĕрĕксенчен йышăннисем те (тĕслĕхрен, *тукан*), перссемпе арабсенчен йышăннисем те пулнă (*-ван, -пану, -ниса* т. ыт. те). Юлашкисем çинчен каярахпа калаçăпăр.

ПЕРССЕМПЕ АРАБСЕНЧЕН ЙЫШĂННĂ ЯТСЕМ

Ытти тĕрĕксем хушшине перс тата араб ячĕсем ислам тĕнĕпе пĕрле сарăлнă. Чăвашсем ислам тĕнне йышăнман, çавăнпа вĕсен авалхи ячĕсем хушшинче перссемпе араб ячĕсем йышлă пулмалла мар пек. Чăннипе вара кунашкал ятсем нумай. Паллах, чăваш хушшинче вĕсем пурте чăвашланнă, чăваш чĕлхин кĕввине кĕрсе, чăваш ячĕсем пулса тăнă. Çиелтен кăна пăхсан, нумай чух вĕсем ютран килнине пĕлме те çук (*Аван, Асамат, Аман, Асат, Акмал, Эхтем* т. ыт. те). Çапах та чылай ят ютран килни вĕсен сасă тытăмĕнчен курăнать. Ят ютран килнине кăтартакан чи паллă уйрăмлăх вăл — сингармонизма пăхăнманни. Тăван чĕлхе тымарĕнчен тухнă хутсăр ятсем пурте пекех сингармонизмлă сăмахсем (сингармонизма пăхăнман аффикссем те пур, паллах — *Укан+тей, Тăхт+и*), сингармонизма пăхăнманнисем вара е ютран йышăннисем (*Алиме, Анисса, Камиле*), е хутлă ятсем Велисса<ар. Вели+нисса «хĕрарăм», *Кĕнçамал* авалхи тĕрĕк сăмахĕ *кĕн* «хĕвел»+ар. *çамал* «чипер, илемлĕ»).

Чăвашсен мăн аслашшĕсем ислам тĕнне йышăнман пулин те, перссемпе арабсен йăли-йĕркисенчи хăшпĕр уйрăмлăхсем вĕсен ăстăнĕнче йĕрленсе юлнă. Тĕслĕх-

шĕн, *киремет* сăмах та чăваш чĕлхине арабран килнĕ, *турă* сăмахăн тымарĕ те çав еннеллех туртăнать. Абстрактлă ăнлавсене палăртакан чылай сăмах чăваш чĕлхине арабсемпе перссенчен килни те (*ăраскал, телей, терт, тивлет, техĕм, тĕн, вăхăт, самана* т. ыт. те) вăл халăхсен чăваш хушшинчи вăйăмĕ пысăк пулнине кăтартать. Арабсемпе перссен ячĕсем чăваш хушшинче саралăсси те çавăнтанах тухса тăнă. Вăл вăхăтри тĕрĕксемшĕн, çав шутра чăвашсен мăн аслашшĕсемшĕн те, арабсемпе перссем культура аталанăвĕ енчен маларах иртнĕ халăхсем шутланнă. Каярахрисем, паллах, малтисем еннелле туртăннă, вĕсенчен вĕренме тăрăшнă.

Историрен çакă та паллă: чăвашсен тĕрĕк аслашшĕсем Азирен Европăна килсе тухнă тĕрĕксенчен пĕрремĕшĕсем пулнă. Пирĕн эрăн малтанхи ĕмĕрĕсенче хальхи Казахстанран пуçласа хĕвеланăçнелле сарăлса выртакан анлă çеçенхирсенче йышлă иран йăхĕсем пурăннă: саксем, сарматсем, алансем, скифсем т. ыт. те. Хĕвеланăçнелле куçса пынăçемĕн чăвашсен тĕрĕк аслашшĕсем тĕрлĕ вăхăтра çав йăхсемпе тĕл пулнă, хутшăннă. Çав хутшăнăвăн йĕрĕсем çын ячĕсенче сыхланса юлнă.

Арçынсен авалхи ячĕсем хушшинче чăвашсен *Арçук, Арçи, Арça, Арăç* ятсем пур. Ку ятсен тымарĕ вырăсларан йышăннă *Арсений* ятпа çыхăнмасан та пултарнă. Чĕлхере вăл тымар чăвашсем вырăссемпе хутшăнма тытăничченех пулма пултарнă, чăвашсем ăна иран йăхĕсенчен йышăннă тесе шутлама та сăлтав пур. Скиф чĕлхинче *арша* сăмах «арçын» пĕлтерĕшпе çÿренĕ, унран пулнă ятсем Иранра кăна мар, Арменире те сарăлнă (*Аршак,* сăмахран)[1].

Атнер, Сетнер ятсенчи *-нер* формант та иран чĕлхисем урлă кăна уçăмланать: скиф чĕлхинче *нар(нер)* «арçын» пĕлтерĕшлĕ сăмах пулнă[2]. Апла пулсан, *Атнер, Сетнер* — иккĕшĕ те пулăвĕпе хутлă ятсем.

Тăхтаман ята пирĕн хальхи чĕлхе туйăмĕ *тăхта* глаголтан тунă иртнĕ причастин çуклă форми тесе ăнланасшăн. П. Хусанкайăн *Аптраманĕ* шăпах çавнашкал ăнланнине пула çуралнă ят. Анчах та *-ман (-мен)* формант ытти ятсенче те тăтăш тĕл пулать (яланах арçын ячĕсенче!): *Эл+мен, Эт+мен, Ак+ман, Ал+ман, Эптĕл+*

[1] Основы иранского языкознания. Древнеиранские языки. М., «Наука», 1979, стр. 279.
[2] Çавăнтах, 296 стр.

+мен, Этре+мен, И+мен, Ух+ман е *Ах+ман, Яр+ман, Ят+ман, Кал+ман* т. ыт. те). Кунта вара ăна ниепле те çуклă формăри причасти аффиксĕ теме май килмест. Асăннă ятсенчи *-ман (-мен)* формант тахçан пайăр мар ятранах пулнă пулас. Ăна та чăвашсен аслашшĕсем иран йăхĕсенчен йышăнма пултарнă: скиф чĕлхинче «арçын» пĕлтерĕшлĕ *ману* сăмах пулнă[1]. Ку сăмахран ят формантчĕ çăмăллăнах пулать. *Мантей, Мантай, Мантирек, Манти, Маней, Мани, Манек, Манеш, Маня, Маняк, Манякка* арçын ячĕсем те çак тымартанах тухнă теме май пур. Çапла вара, ютран йышăннă *-ман(-мен)* элемент чăваш чĕлхинче ят тымарĕ пек те, ят тăвакан формант пек те çӳреме тытăннă.

Хĕрарăм ячĕсем хушшинче пирĕн *Уçça* ят тĕл пулать. Хăшпĕр çĕрте ăна *Уççи* те теççĕ: ун пек чух чĕлхе туйăмĕ ăна *уçă* «ключ» апеллятивпа çыхăнтарать пулас, *-и* элеменчĕ вара чĕнӳ аффиксĕ. Анчах та кунашкал çыхăнтарнине ăнланман сăмаха ăнланмалларах тума тăрăшни, урăхла каласан, халăх этимологийĕ вырăнне çеç хума пулать: «уçă, çăраççи» пĕлтерĕшлĕ сăмах ят тума пултарнине кăтартакан тĕслĕхсем нихăш чĕлхере те тĕл пулмаççĕ. Скиф чĕлхинче *ось* «арăм, хĕрарăм» апеллятивран пулнă хĕрарăм ячĕсем пулнă. Чăваш чĕлхинчи *Уçça* та çав тымартан тухнă пулас.

Авалхи ятсем хушшинче *-вар(-вер)* сыпăкпа вĕçленекеннисем чылай тĕл пулаççĕ: *Эхвер* е *Ахвар, Илчевер* (танл.: *Илче), Ухвар* е *Ухвер, Яхвар* (танл.: *Яхван), Левер, Аксĕвер* (танл.: *Аксупай), Селевер* (танл.: *Селей)* т. ыт. те. Сингармонизм йĕркине пăхăнсах çитерейменни (танл.: *Аксĕвер, Микавар, Мулевер, Ухвар — Ухвер*) тата *Илче — Илчевер, Селей — Селевер* евĕр шайлашуллă вариантсем пурри ку сыпăка ят тăвакан формант теме май парать. Апла пулсан, вăл та тахçан уйрăм пĕлтерĕшлĕ пайăр ятран пулса кайнă. Чăваш чĕлхинче те, ытти тĕрĕк чĕлхисенче те ун пулăмне ăнлантаракан сăмах курăнмасть, çавăнпа та *-вар(-вер)* формантăн тымарне ютра шырама тивет.

Арçын ячĕсенче кăна çӳренĕ пулсан, ку форманта иран чĕлхисенчи *вир* «арçын» сăмахран пулнă теме пулатчĕ[2]. Анчах та ку элемент пирĕн авалхи хĕрарăм ячĕсенче те тĕл пулать: *Кĕневер* (танл.: *Кĕнепи, Кĕнеç),*

---

[1] Основы иранского языкознания, стр. 295.
[2] Çавăнтах, 308 стр.

Уневер (танл.: *Унепи, Унеслу, Унеç*), *Кĕлневер* (танл.: *Кĕлнюк*), *Пиневер, Силевер* (танл.: *Силепи*) т. ыт. те. Хĕрарăм ячĕсенче «арçын» пĕлтерĕшлĕ сăмах çӳренине ăнлантарма йывăртарах[1]. Çавăнпа та *-вар(-вер)* элемента иран чĕлхисенчи «хĕвел» пĕлтерĕшлĕ *хвар* (осетин чĕлхинче *хор*, авестăра *хвар*) сăмахпа çыхăнтарни вырăнлăрах пек туйăнать. Кунашкал пĕлтерĕшлĕ элемент нумай чĕлхесенче арçын ячĕсенче те, хĕрарăм ячĕсенче те тĕл пулать. *Унихер* (е *Уникер*) хĕрарăм ячĕсенче те юлашки сыпăкĕ çак тымарпах çыхăннă пулас: *-вар(-вер)* элементра *хвар* сăмахри малтанхи хупă сасси тухса ӳкнĕ пулсан, *-хер* элементра *в* тухса ӳкнĕ (*-вар* <*хвар; -хер*<*хвар*).

Утти (*т* кунта *ть* пек çемçен илтĕнет) ята чăвашсем арçынна та, хĕрарăма та панă. Ун тымарĕ те хамăр чĕлхере курăнмасть. Иран чĕлхисенче каллех ун тымарне тупма пулать — *од* «чун», «пурнăç» сăмах (осетинсен, скифсен). *Ути* (арçын ячĕ те, хĕрарăм ячĕ те), *Утак* (çавнашкалах), *Утюк, Утук, Утиç, Утиван, Утимĕр, Утирек, Утяк, Утьăк* (*Одюков* хушамат «аслашшĕ»), *Утнюхха* ятсен тымарĕнче те çак апеллятивах пулма тивĕç. *Сетруна, Сетрепи* (хĕрарăм ячĕсем), *Сетриван, Сетрухха* (арçын ячĕсем) ятсен малтанхи пайĕ (*сетр-*) пĕрешкел пулни те ăна авалхи тымар теме май парать. Тĕрĕк чĕлхисенче вăл тымара ăнлантармалли сăмах каллех курăнмасть, çавăнпа ăна перс чĕлхинчи *сетаре* «çăлтăр» сăмахпа çыхăнтарма пулать. *Сетрепи* вара «çăлтăр пике» пĕлтерĕшлĕ ят пулса тухать. *Сертепи* ят (ун пекки те пур) вара *Сетрепирен* сасăсем ылмашса ларнипе пулса кайнă, суя этимологи те (*серте* сăмахпа çывхартни) çак процеса çăмăллатнă курăнать.

Иран чĕлхисенче «ирхи çутă, ирхи шуçăм» пĕлтерĕшлĕ *савраг* сăмахран пулнă ятсем пур (тĕслĕхрен, *Савракос*)[2]. *Савран, Саврантей, Савранти, Савринка* (*Савр+инка*), *Савăрле* (пурте арçын ячĕсем), *Саварпи* (хĕрарăмсен) чăваш ячĕсем те çак тымартанах тухнă пулас.

---

[1] Пайăр мар ятран пулнă элементăн пĕлтерĕшĕ палăрми пулсан, вăл арçын ятĕнче те, хĕрарăм ятĕнче те çӳреме пултарать. Акă анатри чăвашсем хушшинче *Кăс, Кăспике, Кăскăс* хĕрарăм ячĕсем пек çеç çӳреççĕ (*кăс* тутарла «хĕр» пулать). Тури чăвашсен вара арçын ячĕсем хушшинче те Кăскăс пур (Ашм. Сл., VII, 190 стр.). Паллах, ку ята арçынна тутарла пĕлмен чăвашсем кăна пама пултарнă.

[2] Основы иранского языкознания, стр. 303.

Паллах, кун пек чухне чăваш чĕлхи иран халăхĕсенчен ят тымарĕсене (урăхла каласан, апеллятивсене) мар, çав тымартан пулнă çын ячĕсене йышăннă. Майĕпен вăл ятсем улшăнса пынă, тĕрлĕ формант хушăннипе пĕр ятранах темиçе ят пула-пула кайнă. Çапах та малтанхи тымарĕ хăшпĕр чух сыхланса юлнă.

Хĕрарăмсен авалхи ячĕсем хушшинче питĕ илемлĕ *Сарине* ят пур. Пĕр евĕрлĕрех илтĕнет пулин те, *Сарпи* ятпа пачах та çыхăнман вăл. *Сарпи* перс чĕлхинчен йышăннă «чипер» пĕлтерĕшлĕ *сар* сăмахран пулнă. *Сарине* вара перс чĕлхинчи *Зарина* ятран пулнă, унта вăл «золотая» пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Илнĕ тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: иран чĕлхисен материалне тĕплĕн тишкерни нумай-нумай авалхи чăваш ячĕсен пулăвне ăнланма пулăшать. Анчах та танлаштарнă чух сăмахсем икĕ чĕлхере пĕр евĕрлĕрех илтĕннине кăна тĕпе хума юрамасть (шел пулин те, пирĕн тĕпчевсенче тулашри пĕрпеклĕх хыççăн кайни те тĕл пулать). Чи малтан çын ячĕ мĕнле-мĕнле йышши апеллятивсенчен пулма пултарнине шута илмелле.

Иран тата араб чĕлхисенчен йышăннă элементсем авалхи ятсенче пирĕн татах тĕл пулаççĕ. Акă вĕсенчен хăшĕ-пĕри.

Арçын ячĕсенче: *-ван (Эливан, Утиван, Ухтиван, Уприван, Сетриван, Иливан, Иçливан* т. ыт. те), перс чĕлхинчи «князь» пĕлтерĕшлĕ *ван* сăмахран пулнă; *-ер (Мултиер, Сентиер, Хунтиер, Пахтиер, Тутиер* т. ыт. те), перс чĕлхинчи «тус, юлташ» пĕлтерĕшлĕ *ёр* сăмахран[1]. Юлашки ушкăнри ятсен пулăвне урăхларах ăнлантарма та пулать. Казахсен *Дияр* ят пур, ăна тĕпчевçĕсем араб чĕлхинчи «страна, область» пĕлтерĕшлĕ *диар* сăмахпа çыхăнтараççĕ[2]. Ку шухăшпа килĕшсен, асăннă ятсенче *-ер* мар, *-тиер* формант уйăрас пулать (Мул+тиер, Сен+тиер, Хун+тиер). Юлашки форманчĕ кĕскелнипе вара *-тер* пулать: *Сементер, Михетер, Ухтер, Саватер.* Икĕ форманчĕ те вариантлă, танл.: *Ухтиер, Ухтияр, Ухтер, Ухтяр.*

Хĕрарăм ячĕсенче: *-пану (Кĕлпану, Элпану),* перс чĕлхинчи «госпожа» пĕлтерĕшлĕ *бану* сăмахран;

---

[1] *Л. В. Данилова.* К изучению арабско-иранских элементов в чувашской антропонимике—II.—«Диалекты и топонимия Поволжья». Чебоксары, 1980, стр 136.

[2] *Т. Жанузаков.* Асăннă ĕç, 48 стр.

-пустан (Кĕлпустан, Ерпустан, Шерпустан), перс чĕлхинчи «цветник» пĕлтерĕшлĕ *бустан* сăмахран;

-сере (Кĕлсере), перс чĕлхинчи «таса» пĕлтерĕшлĕ *сара* сăмахран;

-çамал (-jамал)—Кĕнçамал, Кăнъямал, араб чĕлхинчи «илем» пĕлтерĕшлĕ *джамал* сăмахран;

-камал (Миникамал), араб чĕлхинчи «совершенство» пĕлтерĕшлĕ *камал* сăмахран;

-север (Хĕрсевер, Кĕлсевер, Илсевер), перс чĕлхинчи «украшения» пĕлтерĕшлĕ *зивăр* сăмахран. *Северин, Северчен, Севертен, Севре, Севрепи, Севрук, Севреслу, Севречей, Севриҫе* ятсен тымарĕнче те çак сăмахах пулма кирлĕ;

-нес(-нас) (Шерпинес е *Шерпинас, Нурпинес, Пилпинес),* перс чĕлхинчи «кокетство, каприз» пĕлтерĕшлĕ *наз* сăмахран; ытти тĕрĕк чĕлхисенче ку тымартан пулнă çакнашкал ятсем пур: *Назгуль, Назбиби, Назира, Назым* т. ыт. те;

-нисса (Кĕлнисса, Туйнисса, Хĕрнисса), араб чĕлхинчи «хĕрарăмсем» пĕлтерĕшлĕ *ниса* сăмахран.

Асăннă формантсем тăван чĕлхери тымарсем çумне те *(Хĕрнисса, Хĕрпинес),* ютран йышăннисем çумне те хушăнаççĕ *(Шерпинас, Шерпустан).*

Иран чĕлхисенчи ятсем нумайăшĕ чăваш чĕлхине тӳрремĕнех кĕнĕ пулас: вĕсенчен чылайăшĕ ытти тĕрĕк чĕлхисенче е пачах курăнмаççĕ, е сайра кăна тĕл пулаççĕ. Анчах та хăшĕ-пĕри кӳршĕллĕ тутарсемпе пушкăртсем урлă та кĕме пултарнă. Арабсенчен йышăннă ятсем вара ытларах чух ытти тĕрĕксеннипе пĕр килеççĕ. Ытларах анатри чăвашсем хушшинче çӳренине кура вĕсен пысăкрах пайĕ тутарсем урлă килнĕ теме пулать. В. К. Магницкий авалхи арçын ячĕсен списокне Шупашкар уесĕнчи документсем тăрăх тунă, унта арабран килнĕ ятсем йышлах та мар. Тутарсемпе кӳршĕллĕ пурăнакан чăвашсен кунашкал ятсем тĕп вырăнта тăраççĕ: *Ахмат (Ахмать, Ахматьăк), Велулла* (тут. *Велиулла), Весиле* (тут. *Весиля), Эмир, Эпселем* (тут. *Абсалям), Эрхиме* (тут. *Рахиме), Эхмер, Эхметьян, Эхтем* (тут. *Эдгем), Калиме, Калимулла, Камиле, Саите, Селиме* т. ыт. те. Çак ятсенчен хăшĕ-пĕри В. К. Магницкий списокĕнче çук та *(Велулла, Эпселем, Эхмер, Эхметьян).*

Çапах та пур чăваш хушшинче те çӳренĕ араб ячĕсем те сахал мар. Çакна та палăртса хăварас пулать:

арабпа перс ячĕсем нумайăшĕ пĕрлешсе кайнă, çавăнпа вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма та çук, тĕпчевçĕсем те ун пеккисене пĕтĕмлетсе арабпа перс ячĕ тесе кăна хăвараççĕ.

Ытти чухнехи пекех, кунта та пĕр тĕпренех темиçе ят пулнине курма пулать. Акă ытти тĕрĕк чĕлхисенче (казах, кăркăс, узбек, тутар) пĕрешкелех *Абди* ят çӳрет. Чăвашра ун варианчĕсем виççĕ — *Эпти, Эптюк, Эптюш.*

Тутарсенни пекех, вăрăмрах ятсем пирĕн те кĕскелсе пынă. Темиçе тĕслĕх: тут. *Туймухаммет*>чăв.>*Туймет*, перс. *Шахимерден* «храбрый шах»>чăв. *Шемертен,* арабперс *Шахигали*>тут. *Шигали*>чăв. *Шăхаль,* перс. *Худжашах*>тут. *Хужаш*>*чăв. Хучаш (Хучаш* ял ячĕ те, *Ходяшев* хушамат та çак ятран), араб-перс *Меулешах* >тут. *Меулеше*>чăв. *Мĕлĕш* (ял ячĕсенче сыхланса юлнă), тут. *Мĕхемметиш, Мамадыш*>чăв. *Мамăш* (ял ятĕнче юлнă), тут. *Чурашах*>чăв.*Чураш,* тут. *Ишмĕхеммет* >чăв. *Ишмет* т. ыт. те.

ЧĂВАШ ЯЧĔСЕН АТАЛАНĂВĔ

Маларахри сыпăксенче чăваш хушшинчи ятсене паянхисенчен пуçласа авалхисем таранах кĕскен пăхса тухрăмăр. Вĕсен сăн-сăпачĕпе пĕлтерĕшĕсем те, ят суйламалли сăлтавĕсем те вăхăт иртнĕçем улшăнса пынине асăрхарăмăр.

Пĕтĕмлетерех каласан, чăваш хушшинчи çын ячĕсен аталанăвĕнче тăватă тапхăр палăртма пулать: 1) православи тĕнне йышăниччен хи тапхăр, 2) православи сарăлнă тапхăр —18-мĕш ĕмĕрĕн çурринчен пуçласа 19-мĕш ĕмĕрĕн çуррине çитиччен, 3) православи çирĕпленнĕ тапхăр —19-мĕш ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕнчен пуçласа Октябрь революциччен, 4) хальхи тапхăр.

Пĕрремĕш тапхăрта сĕм-авалтан сыхланса юлнă ятсем те, ютран йышăннисем те йышлă тĕл пулаççĕ. Ютран килнисем хушшинче монголсенчен, авалхи иран йăхĕсенчен (скифсенчен, сарматсенчен), финсемпе угрсенчен, перссемпе арабсенчен йышăннисене палăртмалла. Ютрач йышăнакан ятсене ку тапхăрта чăваш чĕлхи хăй кĕввине килтерме тăрăшнă, хăй йĕркисене пăхăнтарса пынă. Çапах та пур чух та ютран илнĕ ята чĕлхе тăван

ятсен картне лартса çитереймен. Сăмахран, ютран йышăнакан ятсем чылайăшĕ сингармонизм йĕркине пăхăнман (*Атнер, Сарине, Сайте*). Ку тапхăрта чăваш ячĕсен ытларах пайĕ ытти тĕрĕк халăхĕсен ячĕсемпе пĕре килнĕ. Ытти тĕрĕксенни пекех, чăвашсен те хăйсен ячĕсемпе ютран йышăнакан ятсем пĕр-пĕринпе хутăшса кайнă: чăваш тымарĕсем çумне ютран йышăнакан формантсем хушăнма пултарнă, ютран илекен тымарсем чăваш чĕлхинчи формантсемпе пĕрлешекен пулнă. Çавна май ят тумалли модельсем çывăхланса пынă, ятсен пĕрлĕхлĕ системи йĕркеленсе çитнĕ.

Православие йышăнтарнă тапхăрта авалхи ят системи арканма тытăнать. Çуралакан ачана ят хурасси чиркӳ аллине куçать, чиркӳ вара авалхи чăваш ячĕсене пĕрне те йышăнмасть, «таса мар» ятсем тесе тиркет. Çапах та халăх ĕмĕртен пыракан ятсенчен хăвăртах уйрăлаймасть, çавна пула, хут çине çырăнакан ята йышăнмасăр, кулленхи хутшăнура çынсем пĕр-пĕрне кивĕ ятсемпех чĕнеççĕ. Кивĕ ятсемпе çĕнĕ ятсен кĕрешĕвĕ çĕр çул ытла тăсăлать. Халăхра православипе пĕрле килекен ятсем çирĕпленсе пынă май чăвашсен ят системи ытти тĕрĕк халăхĕсен ячĕсенчен уйрăлма тытăнать (ытти тĕрĕксем хушшинче пур çĕрте те тенĕ пекех ислам сарăлать).

Виççĕмĕш тапхăрта чăвашсен авалхи ячĕсем майĕпенех манăça тухса пыраççĕ. Православипе килнĕ ятсем çиеле тухаççĕ, анчах халăх калаçăвĕнче вĕсем тăван чĕлхе йĕркисене пăхăнса чăвашланса каяççĕ, чăн-чăн чăваш ячĕсем пулса тăраççĕ. Çапах та чиркӳ православипе килсе халăх хушшинче чăвашланнă ятсене те йышăнмасть, хут çине çын ячĕсене чиркӳ календарĕнче кăтартнă пек кăна çырса пырать. Çавна пула çыннăн хут çинчи официаллă ячĕпе кулленхи хутшăнури ят хушшинчи уйрăмлăх каллех çухалмасть. Çĕнĕ ятсем çине куçнă пулин те, кулленхи хутшăнура чăвашсем пĕр-пĕрне кивĕ йĕркепех палăртаççĕ: *Сахар Кавĕрли, Кукăр Куçма, Хветут Пăлаки*. Калаçура çынна çакнашкал палăртасси ялта паянччenex пырать.

Тăваттăмĕш тапхăр Октябрь революцийĕ хыççăн пуçланать. Ку тапхăрта ачана ят хурасси чиркӳ аллинчен загс органĕсен аллине куçать, ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕ пулса тăрать. Ачи-пăчине тĕне кĕртекенсем те чылайăшĕ унăн ятне хăйсем суйлама тытăнаççĕ. Анчах та православи чиркĕвĕ икçĕр çула яхăн ирĕксĕрлесе манăçтарнă чăваш

ячĕсем халĕ ĕнтĕ аса килме те пăрахаççĕ, аса килсен те, ĕмĕрлĕхех кивелнĕн, аваллăха юлнăн туйăнаççĕ. Тăван халăхăн иртнĕ кунçулĕпе йăли-йĕркисене чухлакан вĕреннĕ çынсем хушшинче кăна сайра пĕрре *Нарсписемпе Сетнерсем, Атнерсемпе Эрнеписем* курăнкалаççĕ.

Хут çинчи ятсемпе калаçури ятсем майĕпенех çывăхланма тытăнаççĕ. Çынна хушаматпа палăртас, ятран-шывран Петр Николаевич, Нина Петровна тесе чĕнес йĕрке вăй илсе пырать. Халăхра ик чĕлхелĕх сарăлса пынăçемĕн калаçура вырăсли пек Коля, Ваня, Люда, Оля евĕр чĕнӳ формисем анлăн сарăлаççĕ. Çырулăх урлă Европăри халăхсем хушшинчи ятсем *(Эмма, Эльза, Эдуард, Рудольф* йышшисем) хунаса каяççĕ.

Усă куракан ятсен хисепĕ чакса пырас пулмасан, ятсем интернационализациленсе пынине тиркеме сăлтав çук, паллах. Анчах юлашки 20—30 çул хушшинче ятсем ытлашши пĕрешкелленсе кайрĕç, çуралакан ачасен çуррине яхăнĕ 5—6 ятлă çеç пулса юла пуçларĕ. Яташлăх официаллă ĕç-хĕлшĕн те, кулленхи хутшăнушăн та пысăк чăрмав кӳре пуçларĕ.

Халăхра яташлăх виçесĕр ӳсесси тивĕçлĕ органсемпе учрежденисем ят ĕçне йĕркелеме тăрăшманнинчен те килчĕ пулас.

Ытти халăхсем загс органĕсемпе ашшĕ-амăшĕсем валли ят кĕнекисем кăларса тăраççĕ. Пирĕн вара ун пекки халиччен те пулман. Чăн та, 1979 çулта Мускавра «Справочник личных имен народов РСФСР» ятлă кĕнеке тухрĕ. Çитес вăхăтрах «Справочник личных имен народов СССР» кĕнеке тухмалла. Ку кĕнекесенче чăваш ячĕсем те пур, анчах та авалхисем çеç. Çавăнпа та ку кĕнекесем çуралакан ача-пăча валли ят суйлама пулăшасса шанма йывăр. Вĕсен тĕллевĕ те урăхларах, çавна май тиражĕ те пысăк мар.

Авалхи чăваш ячĕсем хушшинче хальхи ятсен интернационаллă фондне кĕме тивĕçлисем сахал мар. Вĕсенчен чылайăшĕ чăваша кăна мар, хуть те мĕнле наци çыннине те илем кӳмелле. Пирĕн вăхăтра ятсене, православи деятелĕсенни пек, «тасалăх» енчен пăхса тиркени пулмалла мар. Пирĕншĕн чăвашла та, вырăсла та илемлĕн, янăравлă илтĕнекен ятсем — пурте таса.

Пулас ят кĕнекисенче чăваш ячĕсене вырăсла епле палăртасси пирки те тивĕçлĕ кăтартусем пулмалла. Акă, тĕслĕхшĕн, православие йышăнман чăвашсем хушшинче

паян кун та документсенче хăшпĕр хĕрарăм ячĕсене икĕ тĕрлĕ çыраççĕ — *Эрнеби, Эльби, Северне е Эрнебия. Эльбия, Северина.* Хăшне сĕнмелле? Кунашкал иккĕленӳсем татах пур.

Чăвашла епле каланине тĕпе хурас пулсан, *Илетер, Иртемен, Исмет, Михетер, Сентиер, Темен* евĕр арçын ячĕсене те вырăсла *Иледерь, Ирдемень, Исметь, Мигедерь, Сендиерь, Темень* çырма тивет (юлашки хупă сассисем кун пек чухне чăвашла çемçен илтĕнеççĕ). Халлĕхе вара кун пек ятсене документсенче те, илемлĕ литературăра та вырăслатарах çыраççĕ (вĕçне çемçетӳ палли лартмасăр: *Иледер, Мигедер, Сендиер*). *Иледер, Сендиер* çырсан, ашшĕ ятĕнче *Иледерович, Сендиерович* çырма пулать, *Иледерь, Сендиерь* çырсан — *Иледеревич, Сендиеревич.*

Загс органĕсемпе ашшĕ-амăшĕ валли ят кĕнеки кăларас умĕн, паллах, çакăн евĕр ыйтусене тĕплĕн шухăшласа татса парас пулать.

ТУПМАЛЛИ

Чăваш ячĕсем 3
Ят мĕн тума кирлĕ? 5
Ял хушшинчи ятпа хут çинчи ят 8
Ятăн пĕлтерĕшĕ пур-и? 11
Ят парасси камран килет? 13
Ку чухнехи яка ятсем 15
Хăш ят лайăх? 19
Аттесемпе асаттесен ячĕсем 22
Вырăс ячĕсен чăваш хушшинчи сăн-сăпачĕ . . 26
Мăн асаттесен ячĕсем 37
Тăван чĕлхе тымарĕнчен тухнă ятсем . . . 40
Тĕрĕк халăхĕсеннипе пĕрешкел ятсем . . . 47
Перссемпе арабсенчен йышăннă ятсем . . . 52
Чăваш ячĕсен аталанăвĕ 58

Иван Андреевич Андреев

ИМЕНА

Редактор **А. П. Кудряшова**
Художественный редактор **Э. М. Юрьев**
Технический редактор **Н. В. Васильева**
Корректор **Л. Т. Захарова**

ИБ 1274

Сдано в набор 26.11.82. Подписано к печати 3.08.83. НТ 19674. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 3. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 3,36. Усл. кр.-отт. 3,67. Учетно-изд. л. 3,28. Физ. печ. л. 2,0. Тираж 3000 экз. Заказ № 4910. Изд. № 137. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

Андреев И. А.

А 65 Çын ячĕсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1983.—64 с.

10 п.

Кĕнекере ятсем мĕнле пулса кайнине çырса кăтартнă.

ББК 81 (Чув)

10 пус.

ЧĂВАШ КĚНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ